Чебоксарская ... им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЮНЬ 29 ЙУНКУН 148 (4961) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

КОММУНИССЕМПЕ ПАРТИРЕ ТĂМАННИСЕН СТАЛИНЛА БЛОКĔН ÇĔНТЕРĔВĔ

Коммуниссемпе партире тăманнисĕн блокĕ тепĕр çĕнтерӳ тӳрĕ. Чăваш республикĕнчи суйлав округĕсенче пуринче те РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене депутата коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсене суйланă.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççи пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш республикĕнчи 96 округра Чăваш АССР Верховнăй Советне 96 депутат суйланă. Вăл депутатсем пурте коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсем. Вĕсен хисепĕнче халăхсен аслă çулпуçĕ Иосиф Виссарионăвич Сталин тата унăн чи çывăх соратникĕсем В. М. Молатăв, М. И. Калинин, Л. М. Каганович, К. Йе. Ворошилăв, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов йулташсем. Сталин йулташпа пĕрле, партипе правителствă руководителĕсемпе перле Чăваш АССР Верховнăй Советне чăваш халăхĕн чи лайăх ывăл-хĕрĕсене суйланă.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама сасă правипе усă куракан 556.778 суйлавçăран 551.139 çын суйлава хутшăннă. Вăл сасă правипе усă куракан пĕтĕм граждансен хисепĕнчен 99 проценчĕ пулать. Вĕсенчен коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн 539.311 çын сасăланă, йе 97,8 процент. Канаш савăт суйлав округĕнчи суйлава хутшăнисен хисепĕ 99,6 процент.

Çак çĕнтерӳ кĕтмен çĕртен пулман. Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ мĕн Совет влаçĕ пуçланнăран вара—1917 çулти Октябĕрти социалисăмла революцирен вара—тĕреклене пынă. Ăна рабочисемпе хресченсен граждан вăрçинче йухнă йунĕпе хытарса тĕреклетнĕ. Вăл блок социалисăм строителствин кĕрешĕвĕ витĕр тухнă. Вăл блок никам çĕнтереймиç вăй пулса тăчĕ.

1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ ССРС Верховнăй Совет суйлавĕсен итогĕсене пĕтĕм тĕнче пысăккăн хакларĕ. Большевиксем туна çитĕнӳсемпе лăпланса лармарĕç. Задачă—республикăсен верховнăй органĕсен суйлавĕсене иртнĕ çулти декабĕрте пулнă суйлавсенчен те лайăхрах тата организацилĕрех ирттерессинче пулнă.

Тĕп Суйлав Комиççи пĕлтерĕвĕ пайан çак задачăна ăнăçлăн пурнăça кĕртни çинчен калать.

Суйлавсен итогĕ çĕршер пин агитатăрсемпе пропагандиссем туса пынă организацилĕ, массăла-политикăлă ĕçе чи лайăх хаклани пулать. Обшчĕствă ĕçĕпĕн тăрăшакансем, партире тăракан тата партире тăман большевиксем, пур çĕре те пырса çитнĕ. Вĕсем совет демократийĕн никĕсĕсем çинчен тимлĕн, çине тăрса, йуратулăн ăнлантарса панă. Вĕсем тăрăшса ĕçленипе большевикла чăнлăхăн сăмахĕ çынсен чĕри патне çитнĕ, суйлавçăсен политикăлă активлăхне çĕкленĕ. Çак актив коммунисла партин чи хаклă капиталĕ.

Суйлавçăсăм хăйсен депутачĕсене çирĕп наказ пачĕç: большевикла парти çулĕпĕрĕпе пĕр пăркаланмасăр пымала, Ленин вĕрентнĕ пек, Сталин вĕрентнĕ пек ĕçлемеле.

Депутат—халăх тарçи, унăн посланецĕ. Депутатшăн хăйĕн мĕн пур шухăшĕсене, хăйĕн мĕн пур пурнăçне халăха панинчен, чыслăрах задач çук. Совет суйлавçи хăйĕн депутачĕсене çакăн пек пулма ӳкĕтлет: ленинла-сталинла пиçĕхнĕ çынсем пулăр, нихăçан та политикăлă обывателсен картне ăнсаăн ларăр, халăх тăшманĕсене нимрен хăрамасăр тата нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтерсе пырăр, йăвăрлăхсене хăйулăн сирсе йарăр, государствăн пысăк ыйтăвĕсене пуçпа шухăшласа ăслăн татса парăр, вĕçне çитиĕх тĕрĕс те тӳрĕ кăмăллă пулăр, пирĕн социалисăмлă тăван çĕршыва йуратăр, сыхлăр, тĕреклетĕр, пур ĕçре те Ленин пек, Сталин пек пулăр.

Коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕн çĕнтерĕвĕ пĕтĕм тĕнчипе калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ туна калама çук чаплă çĕнтерӳ етемлĕхĕн пулас çутă пурнăçĕшĕн хăйулăн çапăçакан паттăрсемшĕн моралĕ пысăк пулăшу пулать. Пирĕн çĕнтерӳ—тăшмансене çĕмĕрни, фашисла разведкăсемпе вĕсен троцкисла-бухаринла агентурине çапса хуçни пулать.

Коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕ тепĕр хут чаплă çĕнтерӳ турĕ.

Сывă пултăр коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕ!

●○●

Чăваш АССР Верховнăй Совет суйлавне ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн суйлавĕсен результачĕсем çинчен пĕлтерни

Пурĕ Чăваш АССРеспубликĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсем 96, вĕсенче 987 суйлав участки.

96 округри суйлав комиççисем пурте пĕлтернĕ тăрăх, 96 депутат пурте суйланнине регистрациленĕ, суйланнă депутатсем коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсем.

Чăваш АССР Верховнăй Совет суйлавĕнче сасă правипе усă курнă суйлавçăсем пурĕ 556.778 çын, вĕсенчен 551.139 суйлавçă сасăланă, вăл сасă правипе усă куракан пĕтĕм граждансен хисепĕнчен 99 процент пулать.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали пĕтĕм округсенче коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн 539.311 çын сасăланă, вăл сасăлама хутшăннисен пĕтĕм хисепĕнчен 97,8 процент пулать.

Чăваш АССР Верховнăй Совет суйлавне ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиççи.

●◆●

Калинкинă йулташа РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланни çинчен мандат панă

Ийунĕн 27-мĕшĕнче РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен 718-мĕш номĕрлĕ суйлав округ комиççин ларăвĕ пулса иртрĕ.

Вăл ларура комиççи Шупашкар хула совет председателне—Калинкинă йулташа РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланни çинчен ĕнентерекен мандат пачĕ.

Малтан суйлав округ комиççин председателĕ В. Харитонăв йулташ сăмах каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче кăçалхи суйлавра суйлавçăсем пит те активлăн хутшăннине, суйлав йĕркелĕн иртнине палăртрĕ.

Калинкинă йулташ мандат илнĕ чухне çапла каларĕ:

— Пайанхи кун ман ĕмĕрте пит те пысăк савăнăçлă кун пулса тăчĕ. Кун пек савăнăça епĕ парти билечĕ илнĕ чухне кăна курнă.

Пирĕн çĕршывра хĕрарăм та, арçын та телейлĕ. Хĕрарăмсем суйлавра пит активлă пулчĕç. Вĕсем хăйсен ретĕнчен чи лайăх хĕрарăмсене Верховнăй Совета суйларĕç. Совет Союзĕнчи хĕрарăмсен пурнăçĕ пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсене мĕнле пурнăçшăн кĕрешмелине кăтартса парать. Çакăн пек пурнăça пире Сталин йулташ туса пачĕ.

Епĕ Аслă Сталина тав тăватăп,—терĕ вăл.

○★○

Лайăх иртрĕ

Елĕкри суйлав участкинче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас ĕç йĕркелĕ иртрĕ. Суйлавра суйлавçăсем 99,9 процент тăран хутшăнчĕç. Ним сăлтавсăр суйлава пыманни пулман. Суйлавçăсем вăхăта аван ирттерчĕç. Кунĕпех буфет ĕçлерĕ. Çамрăксем тĕрлĕрен вăйăсем выльарĕç, ташларĕç, йурăсем йурларĕç. Кунтах патефон сасси йантраса тăчĕ. Шашкă-шахмăтсем, биллиардсем тата хаçат-журналсем пулчĕç.

Çуртсене йалавсемпе, портретсемпе, лозунгсемпе тата плакатсемпе илемлетнĕ. Ваттисене кăшни йалтанах лавпа илсе пынă.

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççинче

1938 çулхи ийунĕн 27-мĕшĕнче Тĕп Суйлав Комиççи РСФСР Верховнăй Советне суйлании результачĕсем çинчен округсенчи суйлав комиççисенчи сведенисем илнĕ. Тĕп Суйлав Комиççи сасăлани результачĕсене шутлассине пур суйлав округĕсем тăрăх та туса иртерет. РСФСР Верховнăй Советне суйлании итогĕсем çинчен пĕтĕмĕшпе 1938 çулхи ийунĕн 29-мĕшĕнче пичетлесе кăларасçĕ.

Округсенчи суйлав комиççисем пурте РСФСР Верховнăй Совет депутачĕсене коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсене суйлани çинчен пĕлтернĕ.

Мускав хулипе Мускав облаçĕнчи суйлав округĕсем тăрăх тата Ленинград хулипе Ленинград облаçĕнчи суйлав округĕсем тăрăх пĕтĕм итогсене илнĕ.

Мускав хулинчи мĕн пур суйлав округĕсем тăрăх 2.520.146 суйлавçăран 2.519.848 çын сасăланă, вăл Мускав хулинчи суйлавçăсен пĕтĕм хисепĕнчен 99,99 процент пулать.

Мускав хули тăрăх 2.509.020 суйлавçă коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă, вăл сасăланисен пĕтĕм хисепĕнчен 99,6 процент пулать.

Мускав облаçĕнчи мĕн пур суйлав округĕсем тăрăх 2.752.767 суйлавçăран 2.746.211 çын сасăланă, вăл Мускав облаçĕнчи суйлавçăсен пĕтĕм хисепĕнчен 99,8 процент пулать.

Мускав облаçĕ тăрăх 2.740.497 суйлавçă коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă, вăл сасăланисен пĕтĕм хисепĕнчен 99,8 процент пулать.

Ленинград хулинчи мĕн пур суйлав округĕсем тăрăх 1.989.098 суйлавçăран 1.985.653 çын сасăланă, вăл Ленинград хулинчи суйлавçăсен пĕтĕм хисепĕнчен 99,82 процент пулать.

Ленинград хули тăрăх 1.970.052 суйлавçă коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă, вăл сасăланисен пĕтĕм хисепĕнчен 99,26 процент пулать.

Ленинград облаçĕнчи мĕн пур суйлав округĕсем тăрăх 1.992.256 суйлавçăран 1.980.168 çын сасăланă, вăл Ленинград облаçĕнчи суйлавçăсен пĕтĕм хисепĕнчен 99,4 процент пулать.

Ленинград облаçĕ тăрăх 1.968.092 суйлавçă коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă, вăл сасăланисен пĕтĕм хисепĕнчен 99,3 процент пулать.

(ТАСС).

Туркмен ССР Верховнăй Советне суйлании результачĕсем

(Тĕп Суйлав Комиççи пĕлтернĕ тăрăх)

Туркмен ССР Верховнăй Советне суйлама сасăлас правапа усă куракан пĕтĕм граждансенчен 99,55 проценчĕ хутшăннă.

Туркмен ССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе туна пĕтĕм суйлав округĕсенче коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн суйлава хутшăннă пĕтĕм суйлавçăсенчен 99,8 проценчĕ сасăланă.

Туркмен ССР Верховнăй Советне суйлана депутатсем хушшинче: Сталин, Молатăв, Ворошилăв, Андрейĕв, Йежов йулташсем.

(ТАСС).

Карел АССР Верховнăй Советне суйлании итогĕсем

Карел АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççи пĕлтернĕ тăрăх, суйлав правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 99,7 процент сасăланă.

Коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăланисен пĕтĕм хисепĕнчен 98,9 процент сасăланă.

Карел АССР Верховнăй Советне суйлана депутатсем хисепĕнче И. В. Сталин, В. М. Молатăв, Л. М. Каганович, К. Й. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, Н. И. Йежов, А. А. Жданăв йулташсем.

(ТАСС).

Китайри хаçатсем ССР Союзĕнчи суйлавсем çинчен

АНЬКОУ, ийунĕн 26-мĕшĕ. Китайри пур хаçатсенче те курăнмалли вырăнта ССР Союзĕнче союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ мĕнле иртсе пыни çинчен çыраççĕ. „Синьжуажибао" хаçат пайан ССРСоюзĕнчи суйлавсем çинчен пысăк статйа пичетлесе кăларнă. „Суйлавсене,—тесе çырать хаçат,—ССРСоюзĕнчи пур халăхсем те чăн-чăн пĕртанлăх никĕсĕ çинче хутшăнаççĕ. Вăл суйлавсем социалисăмлă демократин чаплă çĕнтерĕвĕ пулса тăраççĕ. Союзлă республикăсенчи суйлавсем ССРСоюзĕнчи нацилĕ республикăсем телейлĕ социалисăмлă республикăсем пулса тăнине кăтартаççĕ. Вĕсенче промышлĕннăçпа йалхуçалăхĕ хăватлăн ӳсеççĕ, культурă чечеклене пырать. Троцкиссемпе бухаринĕцсем—фашисăмăн шанчăклă йыттисем—ССРСоюзне хирĕç чейе хайарлăхпа тума хăтланнă ирсĕр ĕçĕсенчен нимĕн те тухманнине суйлавсем уççăн кăтартса параççĕ. Контрреволюционерсем - троцкиссем, нацилĕ республикăсене ССР Союзĕнчен татса илме план тунипе пĕрлех, Китай халăхĕ никама пăхăнас марришĕн кĕрешнине хирĕç, пусмăрта пурăнакан ытти нацисен ирĕке тухасшăн кĕрешессе йухăмне хирĕç пыраççĕ. ССР Союзĕнчи халăхсене суйлавсене ăнăçлă иртернĕ йатпа саламласа, фишисăм агĕнчĕсене—троцкиссене тата бухаринĕцсене хирĕç кĕрешĕве вăйлатса йамала пирĕн. ССР Союзĕн нацилĕ республикĕсенче социалисăм малала çитĕнӳсем туса пыни Китай халăхне хавхалантарĕ тата вăл татăклă çĕнтерӳ тăвас, ирĕке тухас тата Китайăн нацилĕ реконструкцине туса çитерес шанчăка вăйлатать.

(ТАСС)

Мӳскав—Владивосток

В. К. Коккинаки пĕр лармасăр вĕçни

1938 çулхи ийунĕн 27-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе ирхине 8 сехет те 36-минутра хамăрăн пĕтĕм çĕршывшăн паллă лотчик Владимир Константинăвич Коккинаки Брйандинский штурмăнпа пĕрле икĕ моторлă самолот çинче Мускавран Владивостока (7.000 километр хушшине) ниста та пĕрре анса лармасăр вĕçсе çитес шутпа вĕçсе тухнă. Самолот Мускав çывăхĕнчи Шчелковски аеродром çинче вĕçсе çĕкленнĕ. Самолот вĕçсе çĕкленнĕ çĕрте Оборонă промышлĕннăç Халăх Комиссарĕ М. Каганович йулташ, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Сывлăш-Çар вăйĕсен начальникĕ Локтионăв йулташ, Конструктăр Илйушин йулташ, Мускаври пичет представителĕсем пулнă. Сводкăсем кăтартнă тăрăх, ийунĕн 27-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе каçхине 8 сехет тĕлĕнче самолот Мускавран 3.560 километрта пулнă.

(ТАСС).

★

СТАЛИН йулташа

Самолотпа вĕçсе çĕкленнĕ самантра пирĕн шухăшсем Сирĕн çинче—совет лотчикĕсен ашшĕ тата тусĕ çинче пулнă. Сирĕн йат совет авиацин йалавĕ.

Хамăр çине хывнă пысăк та хисеплĕ заданине чыслăн пурнăçа кĕртессе шанса тăратпăр. Совет самолочĕсем пуринчен те инçерех, пуринчен те çӳлерех тата пуринчен те хăвăртрах вĕçĕç. Ăна шантарса тăраканни совет лотчикĕсем хăйсен пĕтĕм вăйĕсене, пĕлӳлĕхне тата маçтăрлăхне тăван çĕршыва пама, хăйĕн аслă халăхне пама хатĕр тăнинче.

В. Коккинаки.
А. Брйандинский.

Шчелковски аеродром, ийунĕн 27-мĕш, 8 сехет те 30 минут.

Коккинаки самолочĕ çинчен килнĕ радиограммăсем

Ийунĕн 27-мĕшĕ. 19 сехет те 57 минут.

Координатсене пĕлтеретĕп: широта 61 градус та 50 минут, долгота 94 градус. Самолот пайĕсем лайăх ĕçлеççĕ.

Брйандинский.

Ийунĕн 27-мĕшĕ, 21 сехет те 00 минут.

Координатсене пĕлтеретĕп: широта 61 градус та 25 минут, долгота 101 градус.

Брйандинский.

Ийунĕн 27-мĕшĕ, 21 сехет те 22 минут

Ванавар тĕлĕнче пыратăп.

Брйандинский.

Ийунĕн 27-мĕшĕ, 22 сехет те 55 минут

Бодайбо тĕлĕнче пыратăп.

Брйандинский.

Ийунĕн 28-мĕшĕ, 00 сехет те 23 минут

Олекма шывĕ тĕлĕнче пыратăп.

Брйандинский.

АСĂРХАТТАРНИ: самолот тӳрĕ линипе шутласан, 4.850 километр вĕçнĕ, чăннипе вĕçнĕ маршрут тăрăх—5.245 километр.

Ийунĕн 28-мешĕ, 1 сехет те 45 минут.

Зей тĕлĕнче пыратăп. Самолот пайĕсем лайăх ĕçлеççĕ.

Коккинаки, Брайандинский.

АСĂРХАТТАРНИ: самолот, тӳрĕ линипе шутласан, 5.265 километр вĕçнĕ, чăннипе вĕçнĕ маршрут тăрăх—5.680 километр.

□◆□

Йут çĕршывсенчи пичет Совет республикĕсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем çинчен мĕн çырать

Йут çĕршывсенчи пичет союзлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсен результачĕсем çинчен тĕплĕн пĕлтерсе çырать.

Францири „Се суар" хаçат хăйĕн Мускаври корреспонденчĕ РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕ Мускавра мĕнле иртни çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Корреспондент Мускав хули суйлав кунхине илемлĕ тумпа тумланни çинчен, çав кун столица иртен пуçласах праçник чухнехи пек çĕклĕнӳпе тата хаваслăхпа пурăнни çинчен, суйлав пункчĕсен çурчĕсенчи илемлĕхпе йĕркелĕхсем, пур çĕрте те чечексем лартни, музыкă, йурă сассисем кĕрлени çинчен тĕплĕн паллă туса çырнă. „Суйлавсем,—тесе çырать корреспондент,—ССР Союзĕнче халăхсен калама çук пысăк праçникĕ пулса тăчĕç".

Англири пысăк хаçат—„Манчестер гардиан" хăйĕн Мускаври корреспонденчĕ суйлавсем çинчен йатарласа пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Корреспондент çапла çырнă: совет суйлавçисем „Сталиншăн, тăван çĕршывшăн тата социалисăмшăн сасăларĕç",—тенĕ. Корреспондент суйлав кунхине Мускавра праçник чухнехи пек çĕкленӳпе хавхалану çинчен тата хулан илемлĕхĕсем çинчен тĕплĕн çырса кăтартать. Англири ытти хаçатсем те РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлавĕсем мĕнле иртни çинчен тĕплĕн çыраççĕ.

Америкăри буржуалă хаçат—„Нйу-Йорк таймс" РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсем çинчен пысăккăн пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Статйана: „Суйлавçăсем çĕр проценчĕпех Сталин политикишĕн сасăлаççĕ. Совет халăхĕ праçник чухнехи пек шухăш-кăмăлпа" тесе йат панă. Çав хаçатăн Мускаври корреспонденчĕ суйлавсен йачĕпе пулса иртнĕ уйавсем çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă.

(ТАСС).

Тутар делегацийĕ Чăваш республикĕн районĕсенче

Чăваш республикĕ Мордва тата Тутар республикĕсемпе ăмăртса ĕçлет. Çак кунсенче Тутар республикĕнчен делегаци килсе, пирĕн колхозсем социалисăмлă ăмăрту договăрне мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслерĕç. Вĕсем районсенче çуракине мĕнле пахалăхпа иртернипе, тырпулсене уйран пуçтарса кĕме йепле хатĕрленсе пынипе тĕплĕн паллашрĕç.

Патăрйел районĕ Йелчĕк районĕпе ăмăртать. Çав ăмăртса ĕçлекен икĕ районра икĕ тĕслĕх. Патăрйел районĕнче вăйлă тырпулшăн çине тăрса ĕçлени çук. Тутар республикĕнчен килнĕ делегаци Патăрйел районĕнчи Ленин йачĕпе тăракан, „Хĕрлĕ йалав" колхозсен тата МТС ĕçĕсемпе паллашрĕ. Ленин йачĕпе тăракан тата Чăваш Сăкăтри „Хĕрлĕ Йалав" колхозсем ку вăхăтченех аван çапса пĕтермен. Ку колхозсенче ирхи çĕртме сухи планне те тултарман. Çавнашкалах тырпулсене пуçтарса кĕме те йапăх хатĕрленеççĕ. Йалхуçалăх машинĕсем йусавсăр, ампарсем, витнĕ итемсем хатĕр мар. „Хĕрлĕ Йалав" колхозра жнейкасене йачĕшĕн кăна йусанă.

Патăрйел районĕнче çумкурăксемпе пачах кĕрешмеççĕ тесен те тĕрĕс пулать. Калчасене çумкурăксем пусса илнĕ. Уйрăмах, вăрлăхлăх участкăсене таса тытса тăрассине манăçа хăварнă Патăрйел районĕнче.

МТС ĕçĕсене те ырлама çук. Жнейкăсем, комбайнсем, молотилкăсем хатĕр мар-ха. Комбайнсем вальли колхозсенче участкăсем уйăрман. Хăшпĕр колхозра уйăрнă пулсан та вĕсене таса, лайăх пăхса çитĕнтерни çук.

Йелчĕк районĕнче ĕçсем пачах урăхла. Кунта тырпулсене уйран пуçтарса кĕме хатĕрленес ĕçе суйлава хатĕрленессипе сыхăнтарса пынă. Колхозсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй совечĕсен суйлавне тырпулсене уйран пуçтарса кĕме тĕплĕн хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илчĕç.

Кушкăри „Ким", Кавалти „Комбайн", Ентепери Горький йачĕпе тăракан колхозсем çуракине пысăк пахалăхпа иртернĕ. Çавăн пекех тырпулсене пуçтарса кĕме лайăх хатĕрленнĕ. Йалхуçалăх машинĕсем, витнĕ итемсем, ампарсем, михĕсем, кĕлте турттармали урапасем хатĕр. Тырă типĕтмелисене те йĕркеленĕ. Çак колхозсем уйри тырпулсене йаланах таса тытса тăраççĕ. Вăйлă тырпулшăн „Ким" колхоз тăрăшса ĕçленине палăртса хăварас пулать. Ку колхозра çумкурăксене çумлама кашни бригадăра виçшер звено туса, вĕсене участкăсем çирĕплетсе панă. Кашни звено пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта колхоз кашни ĕçкунĕ тăрах 12-шер килограм тĕштырă валеçнĕ. Кăçал колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 120 пăтран кайа мар тĕштырă илессишĕн кĕрешет.

„Ким" колхозра 6 жнейкă, 2 молотилкă, витнĕ итемсем—2. Çаксене пурне те лайăх йусанă. 150 михĕ хатĕрленĕ. Кĕскен калсан, Йелчĕк районĕнче вăйлă тырпулшăн тăрăшса ĕçлени курăнать.

МТС-че те тырпулсене уйран пуçтарса кĕме хатĕрленсе çитнĕ теме пулать. 8 комбайн колхозсене йанă. Молотилкăсене йусаса çитернĕ. Çунтармали кирлĕ таранах курсе килнĕ. Çак кунсенче 8 комбайн килмеле.

Йелчĕк районĕ ирхи çĕртме сухине 97,6 процент тултарнă.

Тутар республикĕн делегацийĕ Шăнкăртам районĕнчи Суринскăри „Марс", Кзыл Чишмари „Майак" тата „Кзыл йул" колхозсен ĕçĕсемпе паллашрĕ. Шăнкăртам районĕнче те тырпулсене пуçтарса кĕме лайăх хатĕрленеççĕ. Калчасене таса тытса тăраççĕ.

Уйрăмах, Суринскăри „Марс" колхоз тырпулсене пуçтарса кĕме аван хатĕрленсе çитнĕ. Кунта жнейкăсем 12, сортировкăсем—2, вейалкăсем—2, тырă типĕтмели—1. Çаксене тĕплĕн хатĕрлесе хунă. Ампарсене тасатса дезинфекциленĕ. Кĕрхи тата çуртри калчисене икшер хут çумласа тухнă.

Тырпулсене пуçтарса кĕме ĕç планĕ туса хатĕрленĕ. Кашни колхозник хăй мĕнле ĕçре ĕçлессине халех пĕлсе тăрать.

Тутар республикĕнчен договăра тĕрĕслеме килнĕ делегаци Патăрйел районне тырпулсене уйран пуçтарса кĕме тĕплĕн хатĕрленме сĕнӳ парса хăварчĕ.

Гр. Калинин.

Андрей Александрăвич Жданăв суйланнă округра

Шурча суйлав округĕнчи суйлав участкисене хĕвелпе пĕрлех çынсем пухăна пуçларĕç. Ир ирех пынисем хушшинче ваттисем ытларах. Анчах калаçнине итлесен никам та вĕсене ватă тесе калас çук. Вĕсем çамрăксемпе пĕрлех колхозри ĕçсем çинчен калаçаççĕ, кулаççĕ.

Доронин йăчĕпе тăракан колхозри старик Йефим Михайлăвич Михайлăв малтан сасăлакансен хисепĕнче. Анчах вăл унтан та малтан сасăласа тухнă ытти суйлавçăсем пекех, сасăласа тухнă хыççăн суйлав участкинче çамрăкрах суйлавçăсене ĕлĕкхипе хальхи пурнăç çинчен чылай каласа пачĕ.

— Миçе çулта есĕр? — ыйтрĕ пĕри.

— 21 çула пусрăм,— ответлерĕ старик. Хăшĕсем вăл каланине ăнланмарĕç. Йефим Михайлăвич ăнлантарса пачĕ.

— Революциччен çемйере пирĕн 8 çын пулнă, çĕр икĕ йатшăн кăна. Çĕнĕ тырă çĕр шăначчен çиме те çитмесчĕ. Патша йыттисем ăнакăна пăхса тăмасчĕç. Хырçă-налогшăн алăри йулашки татăк çăкăра илсе кайаччĕç. Пурнăç пулман ун чух. Манăн пурнăç 1917 çулта пуçланчĕ!..

Старик малала хăй хальхи колхозра мĕнле пурăнни çинчен, çемйи çинчен каласа пачĕ. Колхозра вăл ударниксен хисепĕнче. Çемйере 5 çынран иккĕшĕ кăна колхозра йалан ĕçлесе пыраççĕ пулин те икĕ çул çимелĕх тырă илни çинчен калать вăл. Аслă ывăлĕ Хĕрлĕ Çара тивĕç пулнишĕн, кĕçĕнрех ывăлĕ комсомол райкомĕнче ĕçленишĕн, кĕçĕн хĕрĕ шкулта отличнă вĕреннишĕн савăнать.

— Халĕ манăн пурте çитет. Çавăн пек хальхи пирĕн пурнăç. Çавăнпа епĕ хама 21 çулта тетĕп!..

Йефим Михайлăвич Михайлăв сасăлама пынă суйлав çуртĕнче илемлĕ. Йĕри-тавра йăвăçсем лартса тухнă.

— Ак тата, ĕнер каçхине кунта нимĕнле йăвăç та çукчĕ. Пайан кам ирех касса килме, лартса тухма ĕлкĕрнĕ?—тĕлĕнеççĕ сасăлама пыракан суйлавçăсем.

Суйлав участкинче халăх татăлмасть. Пĕрисем сасăлама кĕреççĕ, теприсем сасăласа тухаççĕ. Пĕрпĕрне тĕл пулса сăмах-йумаха пуçарса йараççĕ.

Акă „Мировой Октабĕр“ колхозран килнисем „Красная Чувашия“ колхозникĕсене ĕнер хăйсем „Волочаевские дни“ йатлă кино-картинăна курни çинчен каласа параççĕ. „Красная Чувашия“ колхозри 75 çулхи старик Порфирий Захарăвич Кулагин хăйĕн „хуйхи“ çинчен каласа парать. Вăл сасăлама малтанхи суйлавçăсемпе пĕрле кĕреймен.

— Епĕ ăна кăна тукаларăм, флагсем çакрăм... 6 сехет çитмен тесе. Суйлав пуçланнă та мен!

Йапăшри суйлав участкинче пушшех те илемлĕ те аван. Кунта суйлава йатарласа урам тăршшĕпех çул çине хăйăр сарса тухнă. Урам тăршшĕпех хĕрлĕ флагсем вĕлкĕшеççĕ. Кĕçĕн Турхан çамрăкĕсем кунта сасăлама ушкăнпа—флагсемпе, купăспа килчĕç. Вĕсем хушшинче пирвайхи хут суйлава хутшăнакансем те пур.

П. Т.

Пурте пĕр çын пек пырса сасăланă

ЧУРАЧĂК. (Çĕрпӳ р., хамăр корр.) Ийунĕн 26-мĕшĕнче Чурачăк суйлав округĕнчи суйлавçăсем пурте пĕр çын пек пулса суйлав участкисене пырса РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Зойă Ананийĕвна Андрейĕва йулташшăн, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Николай Иванăвич Йежов йулташшăн сасăларĕç.

Округри пур суйлав участкисенче те ирхине 6 сехетрен пуçласа каçхине 9 сехет тĕлне пĕтĕм суйлавçăсем сасăласа пĕтерчĕç. Çĕрле шăп 12 сехет иртсен участкăсенчи суйлав комиççисем сасăсене шутлама пуçларĕç. Сасăсене шутланă чухне суйлав комиççи членĕсемпе пĕрлех общĕствăлă организацисен тата ĕçсынни общĕствисен йатарласа уйăрнă представителĕсем, пичет представителĕсем пулчĕç.

Ийунĕн 27-мĕшĕнче ирхине 10 сехет тĕлне участкăсенчи суйлав комиççисен председателĕсем комиççи членĕсемпе пĕрле кашни суйлав бӳллетенĕ тăрăх тĕрĕслесе суйлав результачĕсене çырнă протоколсене илсе пыма пуçларĕç.

Чи малтан Чурачăк, Йамаш, Аслă Тукаль суйлав участкисенчен суйлав результачĕсем çинчен çырнă протоколсене илсе пычĕç. Ку суйлав участкисенче суйлавçăсем 100 проценчĕпех суйлав участкисене пырса коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăланă.

Ийунĕн 26-мĕшĕнче каçхине кашни суйлав участкинчех чаплă весчĕрсемпе массовкăсем иртерчĕç.

В. Ваçилйĕв.

Коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн

СЕНТĔРВĂРРи. (Телефон тăрăх). Аслă Астакасси суйлав участкинчи суйлавçăсемшĕн ийунĕн 26-мĕшĕ савăнăçлă праçник пулчĕ. ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Наратчакки суйлав округĕнче мĕн пур суйлавçăсенчен коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн 99,7 процент сасăларĕç. Варманкасси тата Наратчакки суйлав участкисенче суйлавçăсем 100 проценчĕпех суйлава хутшăннă. Кун пек тĕслĕхсем округра татах та пур. Наратчакки участкинче суйлавçăсем вальли канмали вырăн колхоз пахчинче пулчĕ. Унта кунĕпех оркестр выляре. Колхоз хорĕ тĕрлĕрен йурăсем йурласа пачĕ. Хуткупăсçăсемпе суйлавçăсем хаваслăн ташларĕç. Кайран пахчара пĕрле ларса чей ĕçрĕç. Унтах буфет пулчĕ. Чылайĕшĕ чи малтан сасăлас тесе ирхине 6 сехетчен суйлав участкисене пынă. Кĕçĕн Астакасси участкинче чи малтан Сĕнтĕрвăрринчи спирт савăтĕнчен технолог Петров Федот Тихăнăвич урнăна бӳллетен йачĕ. Вăл савăтра стахановла йухăма пуçарса йаракание пулса тăрать, ĕçре кăтартулă ĕçленĕшĕн ăна премисем панă.

Прака Сатур.

В. М. Немцĕва мандат панă

ЙЕЛЧĔК, ийунĕн 28-мĕш, (телефон тăрăх). ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçленĕ Йелчĕк суйлав округ комиççии ийунĕн 27-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче Владимир Михайлăвич Немцĕва Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланни çинчен мандат панă.

Немцĕв йулташ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланни çинчен мандат илнĕ хыççăн:

— Ман çине пысăк шанăç хунăшăн суйлавçăсене тав тума манăн сăмахăм та çитмест. Çак шанăçа епĕ лайăх ĕçленипе, халăх тăшманĕсене хирĕç вăйлăн кĕрешсе пынипе тата Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн ĕçлесе пынипе ответлĕп,—терĕ.

Ф. Майков

Суйлав лайăх иртрĕ

ШĂХАСАН. Вăрман Йенĕш суйлав участкинче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ лайăх иртрĕ.

Кунта чи малтан 60 çулхи Арсенти Кузнецов пырса сасăларĕ. Çак кун колхозниксем хаваслăн, савăнăçлăн, праçник чухнехи пек çипуççемпе çӳрерĕç.

Сарлака урам ытла та илемлĕн курăнса тăрать, халăх суйлав çурчĕ умĕнчен каçченех саланмарĕ. Унта тĕрлĕрен вăйăсем выляреç. Суйлавçăсем йурласа, ташласа савăнчĕç. Урамра суйлав çурчĕ патĕнче буфет ĕçлерĕ.

Вăрман-Йенĕш суйлав участкинче суйлав пит ăнăçлă иртрĕ. 467 суйлавçă пурте суйлав çуртне пырса сасăларĕç.

Н. Михайлăв.

Колхоз хорĕн пултарулăхĕ

ÇĔРПӲ. Кăшаркассинчи „Пионер“ колхозра 40 çынтан хор кружокĕ организациленĕ. Кружокра çамрăксемпе пĕрлех, стариксемпе карчăксем те хаваслансах йурлаççĕ. Хор ернере пĕр хут, кашни шăматкун каç клубра концерт парать. Кунсăр пуçне хор çывăхри йалсене тухса çӳрет.

Ийунĕн 24-мĕшĕнче хор кружокĕ Шупашкар районĕнчи Шемшер йармăркине кайрĕ. Унта „Хĕвелĕмĕр Сталин“, „Пирĕн униче шĕшкĕлĕх“, „Ан авăн, шĕшкĕ“ т. ыт. йурăсене йурласа пачĕ. Çывăхри колхозсем хор кружокне час-часах пырса концертсем пама чĕнеççĕ.

Хальхи вăхăтра хор çĕнĕ йурăсем чылай вĕренет. Çитес кунсенчех колхозсем тăрăх тухса кайать.

А. И.

Пианистсен Брӳççĕл хулинче пулнă пĕтĕм тĕнчери конкурсĕнче Совет пианисĕсем чаплă çĕнтерӳ турĕç. Конкурсра комсомолец Емиль Гильельс—пĕрремĕш преми, комсомолец Йакăв Флийер—виççĕмĕш преми илнĕ. Пианистсем ийунĕн 25-мĕшĕнче Мускава таврăннă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Емиль Гильельс (сулахайри), С. Е. Фейнберг тата Йакăв Флийер.

Дм. Фавилович фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото) „Пресклише“.

1938 çулхи зайом облигацисене сутни

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кăçалхи апрелĕн 30-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, государствăн 1938 çулхи шалти выигрышлă зайомне кăларнă. Ийунĕн 14-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи тĕп перекет кассине çав зайом облигацисен малтанхи партине йарса панă. Пĕтĕмпе 28.000 тенкĕлĕх облигаци килнĕ.

Государствăн 1938 çулхи шалти выигрышлă зайом облигацисене халиччен хи пек кĕтмеле çырăнтарса сутмаççĕ. Çĕнĕ зайома перекет кассисем урлă тӳрех укçала сутса халăх хушшине вырнаçтараççĕ. Зайом облигацисем перекет кассисене киличчен, вĕсене вăхăтлăх квитанцисемпе сутнă. Шупашкарти тĕп перекет касси çавăн пек вăхăтлăх квитанцисемпе 14.250 тенкĕлĕх облигаци сутнă. Облигацисем килсен вăл квитанцисемпе 7.150 тенкĕлĕх облигаци панă.

1929 çулта, 1930 çулта, 1932 çулта тата 1935 çулта кăларнă государствăн шалти выигрышлă зайом облигацисене çĕнĕ зайомпа улăштараççĕ. Перекет касси çав малтан кăларнă зайом облигацисемпе улăштарса 9.800 тенкĕлĕх çĕнĕ зайом облигацисене панă. Тӳрех укçа тӳлесе 1.050 тенкĕлĕх сутнă.

Государствăн малтан кăларнă зайом облигацисене облигаци мĕн чухлĕ тăнă хакпа улăштараççĕ. Çĕнĕ зайом облигацисемпе улăштарнă чухне зайом тытакан çын килĕшнĕ тăрăх облигацисене тĕрлĕрен хак тăраканнисене (200, 100 тата 50 тенкĕлĕх тăраканнисене) памала.

1930 çулта кăларнă 9 процентлă выигрышлă зайом облигацисем тăрăх, вĕсен купонĕсен срукĕ 1938 çулхи ийунĕн 1-мĕшĕнче тухнă пулсан, перекет кассисем вăл купонсемшĕн укçине-йăлтах тӳлеççĕ. Кунсăр пуçне 1938 çулхи августăн 1-мĕшĕнче срук тухакан купонсемшĕн вĕсен хакĕнчен икĕ виççĕмĕш пайне тӳлеççĕ. Çав зайомăн 1939 çулхи августăн 1-мĕш хыççăн срук тухакан купонсемшĕн укçа тӳлемеççĕ.

Малтан кăларнă шалти выигрышлă зайомсене илнĕ çынсен, вĕсене çĕнĕ зайомпа улăштаричченех, вылляв тиражĕсен таблицисем тăрăх тĕплĕн тĕрĕслесе тухмала, мĕншĕн тесен облигацисене улăштарнă хыççăн перекет кассисем, выляса илнĕ пулсан та, выльяв укçине тӳлемеççĕ.

Çитес кунсенчех кăçалхи зайомăн облигацисене татах çĕнĕрен йарса парасса кĕтеççĕ.

Вуткăвартан лайăх сыхланнăшăн çăмăллăх илтĕмĕр

ТРАК. Уйкас Йунтапари „Çĕнĕ пурнăç“ колхоз вут-кăвартан сыхланас ĕçе лайăх организациленĕ. Пĕр уйăх кайарах колхоз стандартлă формăпа пожарнăй вышкă туса лартрĕ. Колхозăн пĕрлештерне çурчĕсем пĕр пĕринпе йунашар ларнăран коньухсен çуртне урăх çĕре куçартăмăр. Хурал тăрассине çирĕплетрĕмĕр. Охранниксем кашни сехетрех сехет чанĕ çапса тăраççĕ. Çавăн пекех кашни колхозник килĕнче тата колхоз стройкисем патĕнче каткасемпе шыв лартса тухнă.

Обиазательнă йĕркепе окладлă страховани иртерессипе çинчен кăçалхи ийунĕн 11-мĕшĕнче Чăваш правительстви йышăннă постановлени тăрăх, пирĕн колхоз çурт-йĕрсене страховани тунă тăрăх тӳлемели укçаран 50 процент скидкă илчĕ. Çавăн пекех ăратлă вылăхсене страхланăшăн тӳлемелинчен те 20 процент скидкă илтĕмĕр. Ку вăл 1.500 тенкĕ ытларах çăмăллăх илни пулать.

Н. Илйин.

Шкул çурчĕ çĕрет

Ураскассинчи (Тăвай р.) пуçламĕш шкулăн иртнĕ çулсенче пĕр пӳлĕм çеç пулнă. Çавăнпа икĕ çменă вĕрентетчĕç. „Ĕçлĕх çулĕ“ колхоз 1936 çулта шкул валли виçĕ пӳлĕмлĕ çĕнĕ çурт лартрĕ. Анчах халĕ шкул çуртне пĕтĕмпех йапăхтарса йанă. Çуртăн крышши ишĕлсе аннă,—çăмăр анать. Кун çинчен Тăвай райĕçтăвкомĕ те пĕлет. Апла пулин те шкул çуртне йусаттарма тăрăшмаççĕ.

К. Лазăрĕв.

Суйлавра хĕрарăмсен пысăк активлăхĕ курăнчĕ

ТРАК, ийунĕн 28-мĕшĕ (телефон тăрăх). Усĕк суйлав округĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ аван иртрĕ. Суйлавçăсем пур участкăсенче те пурте пĕр кар пухăнчĕç, коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн хаваслансах сасăларĕç. Арçынкасси, Вутлан, Йенĕшкасси, Уйкасси тата Усĕк суйлав участкисенче суйлавçăсем пурте суйлава пынă.

Суйлавра уйрăмăнах хĕрарăмсен политикăлă активлăхĕ хытă ӳсни курăнчĕ. Округра хĕрарăм-суйлавçăсем 3.153 çын. Вĕсенчен пĕр хĕрарăм çеç суйлава пыман. Кушкăри суйлав участкине чи малтан 81 çулхи суйлавçă Иринă Оçипăвнă пынă. Суйлав участкине вăл пĕр сехет малтан пырса ларнă.

Закамский.

Суйлав савăнăçлăн иртрĕ

ТРАК. (Хамăр корр.). Ийунĕн 26-мĕшĕ историлĕ чаплă кун пулчĕ. Çак кун Супар суйлав округĕнчи суйлавçăсем пурте пĕр кăмăллă пулса РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă Дубăв йулташшăн (ПСК(б)П Чăваш Обком çекретарĕ), Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Дмитрийĕва йулташшăн (ПСК(б)П Трак райком инструктăрĕ) сасăларĕç.

Çак кун Йанкас суйлав участкинчи суйлавçăсем ирпе ирех çĕнĕ, илемлĕ тумтирсем тăхăнса суйлава пычĕç. Кашни суйлавçăн питкуçĕнче савăнăçлăх курăнать. Кашнийех вĕсем Сталинла Конституци тăрăх суйлава хутшăннишĕн хĕпĕртеççĕ, савăнаççĕ. Акă, кăçал 1-мĕш хут суйлава хутшăннă суйлавçă колхозри стахановкă Варварă Федотăва савăннипе çапла калать:

— Епĕ çак куна нумайранпа кĕтнĕ. Пайан манăн кĕтнĕ ĕмĕт çитрĕ, епĕ Сталинла Конституци тăрăх 1-мĕш хут суйлава хутшăнса Верховнăй Советсене депутата суйлама хамăр тăратнă кандидатсемшĕн сасăларăм. Çак кандидатсемшĕн сасăланипе пĕрлех епĕ Сталиншăн, телейлĕ пурнăçшăн, вĕренӳ, ĕçлев, канӳ прависемшĕн сасăларăм.

Сывă пултăр Сталинла Конституци!

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин!

Йанкас суйлав участкинче суйлав савăнăçлăн иртрĕ. Участкăра столовăй, парикмахĕрски тата ларйок ĕçлерĕ. Радио, 3 патефон, 1 биллиард, хаçат-журналсем пулчĕç. Çамрăксем волейболла выляреç. Ватти-çамрăкки мĕнĕпех суйлав çуртĕнчен сасăласа тухнă хыççăн гармонь çеммипе ташласа савăнчĕç.

Ватă çынсене суйлава чи лайăх лашасемпе илсе пычĕç.

Савăнăç

КУСЛАВККА комбиначĕ (хамăр корр.). Çитмĕл виçĕ çулхи Ульйанă Йакăвлĕвнă ирхине 5 сехетрех суйлав участкине пынă та клуб çтенисем çине çыпăçтарнă плакатсене, лозунгсене пăхса çӳрет:

— Вуласа пар-ха, мĕн çырнă çакăнта?—ыйтать вăл пĕр çамрăкран.—Ĕлĕк, революциччен, пире хут вĕрентмемар, йалтан вун-вунпилĕк çухрăм айаккала та илсе кайса кăтартмасчĕç. Хут пĕлместĕп, ачам, хут вĕренмен. Хытăрах вуласа, манăн хăлхи те хытăрах!..

Пуçне йап-йака хыртарса йанă çамрăк ăна сасăпа вуласа парать:

„Хамăр сасăсене Совет халăхĕнчи лайăх та шанчăклă ывăлĕ хĕрĕсене парар!“

— Çапла, çапла!—тет Ульйанă Йакăвлĕвнă, — çавсене суйлама килтĕм те пайан, анчах иртерех пулчĕ пулас.

Ульйанă карчăкăн куçĕсем савăнăçпа çуталнă, вăл çамрăк вуланине итлет.

„ССРС халăхĕсен аслă йулташлăхĕ тата тăванлă Сойузĕ сывă пултăр!“

„Суйлавсен кунне — ийунĕн 26-мĕшне пĕтĕм халăхăн пысăк хаваслă уйав кунĕ тăвар!“

Икĕ хутлă пысăк çуртсенчен ушкăнăн-ушкăнăн уйавла тумланнă çынсем тухаççĕ те клуб йенне васкаса утаççĕ.

— Епĕ Праскийе каласа хăвартăм, вăл малта алăк умĕнчех тăрать, епĕр унпа чи малтан кĕрсе сасăлама канаш тытрăмăр,—тет Ульйанă Йакăвлĕвнă.

Пурте сисеççĕ: пайан питĕ пысăк ĕç тумала, пурин те сăн-пичĕсем çавăн çинчен калаççĕ, никам та чĕре тулли савăнăçне пытараймасть.

Кашни кунах хĕвел пăхать, анчах пайан уйрăмăнах çутă та ăшă туйăнать...

Ултă сехет çитмен-ха, çынсем килнĕçемĕн килсе тăраççĕ. Шалта, клубра суйлав пӳлĕмне кĕмели алăк умĕнче чылай халăх пухăннă.

Пĕр-пĕринпе калаçаççĕ, кулаççĕ, суйлав пуçланасса кĕтеççĕ. Акă, комбинат гудокĕ пĕтĕм таврана илтĕнтерсе, савăнăçлă куна саламланă пек, кăшкăртса йачĕ. Аслă Атăл тăрăх, вармансем тăрăх, йалсем тăрăх саланчĕ савăт çиренĕ. Комбинатра ĕçлекенсем, поселокра пурăнакансем гудок сассине кашни кунах итлеççĕ, кунне пĕрре çеç мар, темиçе хут йанăрать унăн сасси: ирхине ыйăхран вăратса ĕçе чĕнет, кăнтăрла апат çимелине асăрхаттарать, каçпа киле кайса канма хушать, мĕнле те пулин инкек синкек тавраш пулсассăн та чи малтан гудок васкаса систерет. Рабочисем гудок сассине хăнăхнă, унăн йуррине йуратаççĕ, анчах пайанхи пек илемлĕ те савăнăçлă кăшкăрнине вĕсем астумаççĕ. Унăн кĕввине духовой оркестр хутшăнчĕ те клубра „Интернационал“ йурлама пуçларĕ. Шăп ултă сехет çитнĕ.

Алăка уçсанах, суйлав пӳлĕмне чи малтан утмăл çичĕ çула çитнĕ ассание, ССРС Верховнăй Совет депутачĕн—Йевдокийа Петровнă Цыгановăн амăшĕ Прасковйă Цыганова, хăй „Праскийе каласа хăвартăм“, текен тепĕр хастарлă асанне Ульйанă Йакăвлĕвăпа пырса кĕчĕç.

— Епĕр пуринчен малтан килтĕмĕр, пире чи малатан хамăрăн чи йуратнă çынсемшĕн сасăлама ирĕк парăр,—теççĕ вĕсем.

Иккĕшĕ те ĕлĕк питĕ пысăк нуша курса, хĕнхур тӳссе ӳснĕ. Прасковйă Цыгановăн хĕрĕ—ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ, икĕ ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта, пĕри вĕсенчен вĕçевçĕ, виççĕмĕшĕ—профсойуз ĕçĕнче, виçĕ хĕрĕ—колхозра ĕçлеççĕ.

Ульйанă Йакăвлĕвăн кĕрӳшĕ Г. Ф. Новикăв комбинатрах цех начальникĕнче ĕçлет.

Иккĕшĕ те вĕсем хастарлă асаннесем, çавăнпа вĕсене пурте хисеплеççĕ: рабочисем те, инженерсем те.

— Çул парăр, асаннесене! Иртерех малала! Суйлав комиççи членĕсем пурте вырăнĕсенче.

— Ытла ир тăнаçке есĕр!—кулкаласа ала пырса тытрĕ комбинат директăрĕ Никитин йулташ.—Сирĕн пата машинă йарас тенĕччĕ, есĕр хăвăрах пуринчен малтан çитнĕ мĕн.

—Вăрантăм та, урăх çывăрса пулмарĕ, — кулкалать Прасковйă Цыганова,—çывăрса кайа йулассăран иртерех пулин те килесех терĕм. Ку куна епĕ чылай вăхăт, питĕ чылай кĕтнĕ. Нӳ епĕ кĕрсе сасăлам-ха, ăçта кĕмеле? Кунта-и?

Ун хыççăн тепĕр кабинăна Ульйанă Йакăвлĕвна кĕчĕ.

Çынсем нумай пуçтараннă пулсан та шавлани илтĕнмест. Пурте йĕркепе пĕрерĕн, икшерĕн, виçшерĕн пырса суйлав бӳллетенĕсене илеççĕ те суйлав кабинисене кĕрсе кайаççĕ.—Пайан музăкçăсем клубрах çывăрнă, килĕсене кайсан çывăрса йулатпăр, тенĕ пулас,—тет Çтепанăва йулташ. Иртнĕ каç кино хыççăн çурçĕр иртсе ик сехетчен ташăсем, йурăсем пулнă.

Ыран суйлав! Ыйăх çук çамрăксен.

Татти-сыпписĕр телейлĕ суйлавçăсем кĕрсе тăраççĕ. Кам кăна çук-ши унта? Рабочисем, инженерсем, тухтăрсем, колхозниксем, студентсем, изобретательсем, рационализатăрсем, бухгалтĕрсем, пожарниксем, чăвашсем, вырăссем, тутарсем, мордвасем т. ыт. те: пурин те вĕсен пĕр тан правасем, пурте пĕр-пĕриншĕн хаклă тăвансем. Сасăланисем, тепĕр алăкран пĕр-пĕринпе калаçса, шӳт туса тухаççĕ те музăк выльанă çĕреле утаççĕ. Музăк ташă кĕввисем калать, çамрăксем ташлаççĕ. Инçе те мар—тепĕр ушкăн, унта пĕри хуткупăспа вылять, тепри „казачок“ ташлать, йулташĕсем алă çупаççĕ. Уйав, аслă уйав пайан.

Вăхăтран вăхăта клуб умне машин пырса чарăнать,—унта суйлавçăсем, ытла ваттисем, хăйсем утса пырайманнисем. Вĕсем те суйлавран йуласшăн мар.

Коридорта хăшĕ-пĕрисем списокĕсенче хăйсен хушамачĕсене шыраççĕ.

— Номĕрне астăваттăмччĕ, манса кайнă,—тет Валейĕв йулташ, çиловойра ĕçлекен рабочи.

— Тупрăм, 185-мĕш номĕр.

Сушильнăй цехра ĕçлекен А. Беричĕв йулташ ĕçе хăй вырăнне йулташне тăратса килнĕ. Унăн номĕрĕ—81-мĕш, Неçтĕрăн—747-мĕш. Мĕн пурĕ 3-мĕш участкăра—2006 суйлавçă.

Пиломатериал биржинче ĕçлекенчи лайăх стахановĕц А. М. Стахейĕв йулташ пырса кĕчĕ. Çӳлĕ, патвар та хулăм çын. Кепкине хывсанах, пуçĕнче хура, кăтра çӳçĕсем хăпарчĕç.

— Уйав йачĕпе сире!—тет вăл хура уссисем айĕнчен тикĕс шăлĕсене кăтартса.—Чи малтан килсе чи пирвайхи бӳллетене епĕ урнăна йарас тенĕччĕ те, май килмерĕ, ĕнер виç сехетре тин çывăрма выртнипе пайан ирех тăман,—хушсă хучĕ вăл бӳллетенсем илсе.

— Çакă ĕнтĕ пирĕн А. Фирсăвана кандидата чи малтан палăртаканни,—тет Çтепанăва йулташ, вăл сĕнӳ пачĕ, ытти рабочисем, инженерсем, служăшчисем унăн сĕнӳне пĕр саслăн йышăнчĕç.

Ĕнер клубра пысăк митинг пулса иртсеччĕ. Зойă Андрейĕвнăпа Александрă Фирсăва хăйсен суйлавçисемпе тĕл пулса пĕр-пĕрне большевикла çирĕп сăмах пачĕç. Вунсакăр çулхи кандидаткă Александрă Фирсăва та тухса сăмах каларĕ.

— Мана çамрăклах çакăн пек хисеп туса, шанса ответлă вырăна суйлама палăртнăшăн сире тав тăватăп, социализмшăн вăйа хурса ĕçлеме сăмах паратăп,—терĕ вăл суйлавçăсене.

Суйлав комиççи членĕсем ларакан пӳлĕме ыттисемпе пĕрле ачалă хĕрарăм Кандокова йулташ пырса кĕчĕ. Упăшки унăн çиловойра машинистра ĕçлет.

— Хăть те мĕн тăвăр, Çтепанăва йулташ, ачана йаслине лĕçмерĕм, илсе килмеле пулчĕ,—уççăн кулкалать вăл.

Ĕнер Çтепанăва йулташ хĕрарăмсене пухса çапла канаш панă:

— Суйлава пынă чухне пĕчĕк ачăрсене йаслине леçсе хăварăр, кансĕрлеме пултараççĕ вĕсем,—тенĕ вăл ачалă хĕрарăмсене.

Анчах икĕ уйăхри Вйачеслав амăшĕнчен йуласшăн пулман. Çапла вара вăл пайан суйлавçăсемпе пĕрле суйлав çуртне пынă.

— Кӳр аллуна, Вйачеслав, хăвăртрах ӳс, пысăк пул,—тет савăт комитечĕн председателĕ Çтепанăва йулташ.

Телейлĕ вăхăтра çуралса ӳсетĕн есĕ Вйачеслав, телей пысăк санăн. Аçу ĕлĕк курнă нушана курас çук есĕ, аннӳ ĕлĕк курнă хĕнхура курас çук, санăн çулу такăр, пурнăçу илемлĕ, хаваслă. Ăс пĕлсессĕн есĕ курса ăнланнă пулăттăн: мĕнле улшăннă пирĕн тĕнче çак 20 çул хушшинче, мĕнле телейлĕ тапхăрта пурнатпăр епĕр. Хăвăртрах ӳс, есĕр ӳссе çитĕннĕ вăхăтра пурнăç çĕр хут илемлĕрех, авантарах, тутăрах, савăнăçлăрах пулать!

Пĕчик Вйачеслав кипкине çиресшĕн пĕчикçеç урисемпе тапкаланать, вăл пуçне çĕклесе пăхасшăн, ыттисемпе пĕрле савăнасшăн.

Алăка уçсанах урамран музăк сасси кĕрсе чуна савăнтарать. Пурин те пайан савăнăç: ваттисен те, çамрăккисен те, арçынсен те, хĕрарăмсен те. Пайан халăхăн пысăк савăнăç.

Çергей Йалавин.

Парти пурнăçĕ

Мухтаннă çĕрте

Отчотпа суйлав пухăвĕн решенисене пурнăçласси кашни парторганизацишĕн тĕп задачă пулмала. Анчах Шупашкарти Садвинтрест совхозĕнчи парторг Маркин йулташ ку ĕç çине тÿнтерле пăхать. Вăл ку таранччен те отчотпа суйлав пухăвĕн решенисене мĕнле пурнăçласси çинчен шутласа пăхман.

Сочувствуйущчисене парти вĕренĕвне йавăçтарман. Парторганизацинче ленинисăма вĕренмели кружок пур. Çийелтен пăхсан ĕç аван темелле. Пропагандис Назарăв йулташ—совхоз директорĕ, суйлавччен ПСК(б)П хула комитет бÿровĕн членĕнче тăнăскер, пĕрмайах хăйĕн кружокне малта пырать тесе мухтама тăрăшнă, ăçта кирлĕ унта: „Садвинтрест совхозĕнче парти вĕренĕвне çÿлĕ вырăна лартнă, вĕсенчен пример илмеле“, тенĕ. Çакăн тăрăх парторганизацинче политикăлă-массăлă ĕçсем те лайăх пулмала пек. Анчах епĕр кунта пĕтĕмпе урăхла ĕçсем куратпăр. Рабочисем хушшинче ĕçлени çук. Хĕлле рабочисем вальли политграмăтă кружокĕ тума хăтланнă, анчах ĕç вырăнтан тапранман. Пайан кунччен те рабочисем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе организацилемен.

Парторганизаци ретне ÿстерес çинчен отчотпа суйлав пухăвĕ питĕ çирĕп кăтартусем парса хăварнă. Анчах парторг Маркин йулташ ку ыйту çине тÿнтерле пăхать. 1937—38 çулсенче пĕр çынна та парти ретне илмен. Сочувствуйущчисен тата комсомолецсен парти ретне кĕме панă заявленисем Маркин йулташăн сĕтел сунтăхĕнче выртаççĕ.

Ака, сочувствуйущчине тăракан Чумакова йулташ парти кандидатне кĕме февраль уйăхĕнче заявленипе рекомендацисене хатĕрлесе панă. Чумакова йулташ ĕçре малта пыракан бригадир, суйлав кампанинче доверĕннăй пулса ĕçленĕ. Унăн заявленине халĕ те пăхса тухман. Çавăн пекех Светлов комсомолецăн заявленийĕ те хускалмасăр выртать.

Совхозра сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтересси çинчен те отчотпа суйлав пухăвĕ хыттăн кăтартса хăварнă. Çак ĕçе те пурнăçлама тытăнман. 1-мĕш участкă начальникĕ Йелагин çуркунне 300 йахăн çамрăк улмуççи тĕпне кăпкалатмасăр хăварнă. Ку агрономи кăтартнине пурнăçа кĕртменни пулать. Акă тата 4-мĕш участкă начальникĕ Логинăв, 1937 çулта парти ретне тасатнă вăхăтра парти членĕнчен кандидата куçарнăскер, рабочисенчен 1000 тенкĕ хăй кăсйине тытса йулнă. Кун çинчен совхоз директорĕ Назарăв йулташ та, парторг Маркин йулташ та пĕлеççĕ. Логинăв хĕрарăмсенчен мăшкăлани те паллă вĕсене. Анчах Логинăв пирки ку таранччен те нимĕн те туман.

Совхозра парти ĕçне хуçалăх ĕçĕпе çыхăнтарма пĕлмеççĕ. Хуçалăх ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Тырпула пухса кĕртме хатĕрленмеççĕ. Коммунистсене пуху пулнă кун тин пĕлтереççĕ. Хăш чухне парти пухăвне совхоз директорĕ Назарăв йулташ: „Ырăн çав ыйту тăрăх пуху тумала“, тесе хушнипе пухаççĕ.

Шупашкар хула комитечĕн Садвинтрест совхозĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци ĕçĕсене тĕплĕнрех пăхса тухмала.

А. Михайлăв.

Таварçавăрнăш планне тултарма чăрмантараççĕ

ШĂХАСАН. Потребкооперацин районри çистемин 1938 çулхи малтанхи çурçулти тавар çаврăнăшĕн планĕ 2250 пин тенкĕлĕх. Çак хисепрен II-мĕш квартăл планĕ 1.570 пин тенкĕ шутланать. Ийунĕн 15-мĕшне илсен çурçул планне 85 процент, II-мĕш квартăл планне 65,2 процент анчах тултарнă. Йалпосене илсен, пуринчен ытла Чулкамака йалповĕ йулса пырать, вăл II-мĕш квартăл планне 50,54 процент çеç тултарнă. Çавăн пекех Шăхасанти магазин та плана 50,65 процент çеç тултарнă.

Малтанхи çурçулăх иртниччен ик-виç кун çеç йулнă. Потребкооперации тавар çавăрнăшĕн çурçулăх планне тултарас çуккине куç умĕнчех. Çакă вăл пĕтĕмпех райсойуза йалпосен руководителĕсем хăйсене панă плана тултарма тăрăшманнинчен, суту-илÿ тума пĕлменнинчен, кооперации общественноçне плана тултарас ĕçе çителĕклĕ мобилизацилеменнинчен килет.

Магазинсенче, лавкасенче, складсенче ĕçлекенсем хушшинче ĕç дисциплини çук. Йалсенче лавкасем час-часах хупă тăраççĕ. Вăл вăхăтра лавкасене темĕн чухлĕ çынсем пыра-пыра каяççĕ. Шăхасан йалповĕн Çĕнĕ Мамири лавкинче ĕçлекен продавец Федăрăв ийунĕн 12-мĕшне 13-мĕш числисенче ĕçкĕпе вăхăта иртернĕ. Çавăн пекех райсойузăн закупщикĕ Степанăв, склад заведуйущчийĕ Крылов ĕçкĕпе иртĕнеççĕ. Вĕсен айăпĕпе йалпосем складран таварсене вăхăтра илеймеççĕ.

Шăхасан, Чулкăмака йалповĕсенчи тата Шăхасанти магазинри продавецсем пасарсене суту-илÿ тума тухмаççĕ. Ийунĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа Канашра йармăркă пулса иртнĕ, унта та тухма ÿркеннĕ вĕсем. Ийунĕн 12-мĕшĕнчех Шăхасан çулла округне кĕрекен суйлавçсен массăлă вăййи пулса иртнĕ. Шăхасан магазинĕ унта та суту-илÿ тума тухман.

Лавкасенче хăш чух кулленхи кирлĕ таварсем: спичка, махорка, сахăр т. ыт. пулмаççĕ. Йалпо председателĕсем, райсойуз работникĕсем, районри суту-илÿ пайĕн работникĕсем—продавецсем, закупщиксем, кладовщиксем мĕнле ĕçленине çителĕклĕ тĕрĕслемеççĕ.

Районри суту-илÿ пайĕ пасарсене йĕркелес тĕлĕшпе начар ĕçлет. Йамашра тата Шăхасанта пасар вырăнĕсене питĕ начар йĕркеленĕ, лавкасем сахал, вĕсем те ванчăкскерсем çеç.

Шăхасанта тата ытти çĕрте те çăкăрпа сутă тăвас ĕçе йĕркелемеççĕ. Сушкă пĕр тĕрлĕ çеç, булкăсем пачах çук, Уйкас Кипекре шурă çăкăр пĕçермеççĕ. Шăхасанти тата ытти столовăйсенче час-часах шур çăкăр пулмасть.

Суту-илÿ организацисен суту-илÿ тума вĕренмени çакăнтан та аван курăнать. Шăхасан витĕр икĕ вăйлă çул тухса каять: Канашпа Шупашкар тата Канашпа Вăрнар хушшинчи трактсем. Çав вăйлă çулсем çинче кĕвас, морс тата ытти тутлă шывсем сутма пĕр киоск та çук. Çавăнпа ĕнтĕ кооперативсен таварçавăрнăш планĕ тулмасть. Çавăнпа ĕнтĕ складсенче таварсем нумай чух сутăнмасăр выртаççĕ.

Шăхасан районĕнчи суту-илÿ организацисен руководителĕсем ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ майăн 9-мĕшĕнче йышăннă постановленинчен халĕ те тивĕçлĕ вывăд туман-ха.

С. Соколов.

Социалисăмлă уйхирте çумкурăксем вальли вырăн çук

Çумкурăксемпе кĕрешес ĕçре улшăну кирлĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти ийунĕн 16-мĕшĕнче „Тырпулсене пуçтарса кĕртме хатĕрленессипе тырпулсене пăхса ÿстересси çинчен“ йышăннă постановлени çинче, тырпулсене пăхса ÿстерес тата çĕртме пуссисене таса тытас ĕçе чылай районсенче йапăх организациленине кăтартса пачĕç. Çавăнпа пĕрлех, калчасене лайăх пăхса ÿстерес тĕлĕшпе çумкурăксене тĕппипех тасатса тăма, вăрлăх участкисем çинчи калчасене çумкурăксенчен çеç мар, урăх суртла тырă калчисенчен те тĕплĕн тасатма кирлĕ тесе кăтартса хăварчĕç.

Çавăнтан вара чылай вăхăт иртрĕ. Анчах та, çумкурăксемпе кĕрешес ĕçре татăклă улшăну çук-ха. Акнă тырпул лаптăкĕнчен ийунĕн 20-мĕшне республикипе мĕн пурĕ те 25 процент çеç çумкурăксенчен тасатнă.

Çумкурăксемпе кĕрешес ĕçе тивĕçлипе организациленĕ районсем пит сахал. Шăнкăртам (79,7 процент), Турхан (65,8 процент), Йелчĕк (55,6 процент), Пăрачкав (49,4 процент) районĕсенче çеç халь çумкурăксемпе кĕрешес ĕç аванрах пырать. Çĕрпÿ—4,8 процент, Йĕпреç—6,6, Канаш—8,2, Йетĕрне—7,3, Трак тата Ишлей районĕсенче ийунĕн 20-мĕшне çитиччен çумкурăксене çумлама кирлĕ пек тытăнайман та.

Çавăн пекех Шупашкар, Тутаркас, Вăрмар, Хĕрлĕ Чутай тата Çĕмĕрле районĕсенче те ку ĕç çителĕксĕр.

Çанталăк çăмăрлă тăрать. Нÿрĕ çанталăкра калчасем çинчи çумкурăксене çеç мар, ирхи çĕртме уйĕнче те пит хăвăрт ÿсеççĕ. Вĕсене культиваци туса пĕтерсе пымала. Çав ĕç те халь районсенче çителĕксĕр пырать. ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн сводки тăрăх ийунĕн 20-мĕшне ирхи çĕртме тунă лаптăкран республикипе мĕн пурĕ те 10 процент çеç культиваципенĕ. Халь ĕнтĕ çĕртме сухине иккĕмĕш хут сухаламала пулса тăрать. Çав ĕçе тĕплĕн ирттересси çинчен колхозсен, уйрăмăнах машинă-трактăрлă станцисен хытă çавăрăнса пăхмала.

М. К.

Колхозсенче

Çумкурăксене çумлаççĕ

Шăхасан районĕнчи Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозра бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе калчасем çинчи çумкурăксене икĕ хутчен çумласа тухрĕç. Анчах та, Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозпа кÿршĕри „Вăрăм вар“ тата Сталин йачĕпе тăракан колхозсенче вăйлă тырпулшăн çителĕклĕ кĕрешмеççĕ. Ку колхозсен уйхирĕнче калчасене çумкурăксем пусса илнĕ пулсан та, пайан кунă çитсе пĕр хут та çумламан.

Йа. Çтепанăв.

Колхоз председателĕсем çумкурăксене çумлатармаççĕ

Йетĕрне районĕнчи хăшпĕр колхозсенче çумкурăксемпе кĕрешес ĕçе лайăх организациленĕ. Çав вăхăтрах чылай колхозсем çум çумлас ĕçе тытăнман та. „Хĕрлĕ çăлтăр“, „Хĕрлĕ Октябĕр“, „Çĕнтерÿ“ колхоз председателĕсем çумкурăксемпе кĕрешес ĕçе колхозниксене мобилизацилес вырăнне, „çум çумламасан улăм ăшĕнче вылăх апачĕ нумай пулать“, тесе лараççĕ. Районри çĕрĕç пайĕ те çум çумлас ĕç тĕлĕшпе колхозсене оперативлă йĕртсе пымасть.

Н. Цветков.

Калчасем çумкурăк айĕнче

Çĕрпÿ районĕнчи „Планета“ колхозра çуркунне тырпулсене акса хăварнă хыççăн никам та уйа тухса пăхман пулас. Калчасем аван шăтнă, анчах вĕсене çумкурăксем пусса илнĕ. 2-мĕш бригадăн уйĕнчĕ 17 гектар çинче пĕтĕмпех чăрăш курăкĕ тухса ларнă. Правленире ĕçлекенсем çапла каласçĕ: „калчасене çумкурăк аптратмасть, вылăхсене çиме улăм лайăх пулать“, теççĕ. Çавăн пек шухăшпа ĕçлесен, паллах, вăйлă тырпул туса илме çук. Çумкурăксене халех тасатмала.

Г. Дернов.

Кувшинкăри канмали çуртра

Илемлĕ вырăна вырнаçнă Чăвашпромкассăн Кувшинкăри канмали çурчĕ. Йĕри тавра илемлĕ хыр вăрманĕ. Çывăхрах Атăл.

Ку канмали çуртра Чăваш республикĕнчи промысла кооперацинче ĕçлекен алăстаç-стахановĕçсем канаççĕ. Вăхăта савăнăçлăн та хаваслăн ирттерме пысăк майсем пур.

Канма çакăн пек лайăх условисем пур пулин те вăл условисемпе тивĕçлĕн усă куратпăр теме çук-ха. Хаçат-журналсене кунта вăхăтра илсе килмеççĕ. Шупашкарта тухакан хаçатсене ик-виç кунтан тин илсе пыраççĕ. Массăлă вăйăсем организацилеме пысăк майсем пур. Ку йенĕпе те ĕç начар тăрать. Волейбол тата ытти вăйăсене никам та организацилемест. Мунча йĕркесĕр ĕçлет, йаланах йе вĕри шыв, йе сивĕ шыв пулмасть.

Çергейĕв.

Совет Сойузĕнчи хуласенче.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Грознăй хулинчи (Чечен-Ингуш АССР) Грознефтĕн инженерлă-техниклă работникĕсен çурчĕ.

Ф. Шевцов фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото) „Прессклише“.

Хаçатсене пăхса тухни вырăнне

Лăпланса ларни сийенлĕ

Колхозсен уйхирĕсенче вăйлă тырпул ÿсет. Тырпул пухса кĕме тухас вăхăт нумай йулмарĕ ĕнтĕ. Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçĕн татăклă тапхăрне—тырпула уйхиртен пуçтарса кĕртес ĕçе кашни колхозăн, МТС-ăн, районти çĕрĕç пайĕн хатĕр пулмала.

Чылай районсенче тырпула уйхиртен пухса кĕртме хатĕрленес ĕç чăтма çук начар пырать: жнейкăсене, комбайнсене, молотилкăсене йусаса пĕтермен, витнĕ итемсем, сушилкăсем тăвасси вăраххăн пырать.

Трак районĕнчи „Колхозник“ хаçат ийунĕн 6-мĕшĕнче „Уборкăна большевикла хатĕрленер“ йатлă умстатйара:

„Районри колхозсен уйхирĕсенче кăçалхи çул 9 комбайн, 21 сложнăй молотилкă тата тĕрлĕ ытти машинсем тухаççĕ. Анчах МТСтанцинче комбайнсене йусас ĕç питĕ вăрăма кайса пырать. Йусамали 6 комбайнран пайанхи куна 2 çеç йусанă. Сложнăй молотилкăсене йусама тытăнман. Кунпа пĕрлех колхозсенче жнейкăсене тата ытти вырмали машинăсене йусама тытăнман“,—тесе çырать. Анчах вăл ийунĕн 6-мĕшчен те, унтан кайран та, колхозсем, бригадăсем, МТС, районти çĕрĕç пайĕ тырпул пухса кĕртме мĕнле хатĕрленни çинчен урăх нимĕн те çырмасть.

Турхан районĕнчи „Коммунар“ хаçат апрел уйахĕнчех:

„Ударнăй“ колхозăн çуракине тухнă вăхăтра пĕр урапа çеç пулнă, вăл та пулин çĕмрĕк. Литвинăв йачĕпе тăракан колхозра лаша кÿлмели хатĕрсем çук. „Красный луч“ тата Каганович йачĕпе тăракан колхозсенче те çакăн пекех“ (апрелĕн 21-мĕшĕ, №34), тесе çырнăччĕ.

Мĕнле тăрать халĕ çак колхозсенче тырпул пухса кĕртме хатĕрленес ĕç? „Коммунарăн“ çакăн çинчен çырмала, вăл çырмасть.

Çак икĕ тĕслĕх пирĕн районти хаçатсенчен чылайĕшĕ тырпул пухса кĕртме хатĕрленес ĕçре айккинче тăни çинчен калаççĕ.

Халĕ районти хаçатсен умĕнче конкретлă задачăсем тăраççĕ. Вĕсен комбайнсене, жнейкăсене, молотилкăсене, тырпула пуçтарса кĕме кирлĕ ытти машинсене, урапасене, кÿлмели хатĕрсене йусас ĕç мĕнле тăнине тăтăшах çутатса пымала, вырăнти организацисене ĕçри çитменлĕхсемпе кĕрешме пулăшмала. Тырпула анаçулă, тăкаксăр пуçтарса кĕртес ĕçре машинăсемпе туллин усă курни пысăк вырăнта тăнине ăнланса ĕçлемеле пирĕн хаçатсен. Машинсемпе ĕçлессине хирĕçле шухăшсене çĕмĕрсе тăкмала.

Халĕ ĕнтĕ МТС-н, колхозсен тырпула уйхиртен пухса кĕртме тĕплĕн тунă план пулмала. Çав плансенче машинсемпе тĕрĕс усă курмалине, ĕç вăйĕсене тĕрĕс тăратса тухмалине, тырпула хăш срукра пуçтарса кĕртмелине тĕплĕн палăртмала. Çак ыйтусем хаçатсен страницисенче паллă вырăн йышăнмала.

Колхозсен вăрлăх участкисенчи тырпулсене пуçтарса кĕртесси çине пысăк тимлĕх хумала. Çапла туса ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1939 çултан пуçласа пур колхозсенче те суйласа илнĕ вăрлăх çеç акмала тесе йышăннине ĕçре пурнăçа кĕртмеле.

Çакăн пекех хаçатсен витнĕ итемсем, сушилкăсем тăвас, ампарсене, складсене тасатас, дезинфекцилес, патшалăха тырă леçме кайма урапа, михĕсем, шăналăксем хатĕрлес ыйтусене манмала мар. Тырпула пуçтарса кĕртес ĕç аван çапассипе, государствăна тырă тăратассипе пĕрле пулса пырать.

„Заготзерно“ пункчĕсен ĕçĕсем çинчен те манмала мар хаçат редакцисен.

Хаçатсен колхозсенчи, бригадăсенчи, МТСтанцисенчи, комбайнерсемпе трактăриссем, колхозниксем хушшинчи социалисăмла ăмăртуван чăн-чăн организатăрĕсем пулмала.

Çителĕксĕр ĕçленĕ

Ăвăспÿрт Кипечри (Шăхасан р.) вăтам шкул 1937—38 вĕренÿ çулне пысăк пахалăхпа вĕçлеймерĕ. Шкула çÿрени пĕтĕм шкулĕпе 94,52 процент кăна шутланать. Çавăн пекех вĕренÿ пахалăхĕ те кунта çителĕклĕ вырăнта тăнă теме çук.

Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче пурĕ 459 ача вĕреннĕ. Малтанхи виçĕ класри 142 ачаран 3 ачине çав класенех вĕренме тепĕр çуллăха хăварнă, 139 ачана малали классене куçарнă.

Çуркуннехи пĕлÿ тĕрĕслевĕ те начар результатсем пачĕ. Пĕтĕм шкулĕпе çав классенех 30 ачана хăварнă, 82 ачан кĕркуннехи пĕлÿ тĕрĕслевĕнче пулмала. Çапла вара, аслă классене мĕн пур вĕренекенсенчен 75,5 проценчĕ кăна куçнă. Ку вăл учителсем тăрăшса ĕçлеменнинчен тата учителсен составĕ тăтăшах улшăнса тăнинчен килнĕ. Акă, вырăс чĕлхипе литературă предмечĕсене иккĕмĕш çурçулта, VIII-мĕшпе IX-мĕш классенче химипе йестествознани предмечĕсене вĕрентме феврал уйăхĕнче тин тытăннă. Çавăн пирки асăннă предметсем тăрăх ачасем 25 процент таран начар паллăсем илнĕ.

Уйрăмăнах IV-мĕш класра вĕрентнĕ И. Çеменăв учител çинчен чăрăнса тăмала. Вăл пĕлÿ тĕрĕслевнĕ начар хатĕрленсе ирттерчĕ. Пĕлÿ тĕрĕслевĕнче вырăс чĕлхипе çырнă диктантра 75 сăмах. 48 ачаран 4 ачанне Çеменăв учител „отлично“ паллăсем лартса панă. „Отлично“ тесен, пирĕн умма тÿрех ачасем пĕр йăнăшсăр, таса çырнă диктант пулмала пек. Анчах кунта йалтах урăхла. Çеменăв учител çыру пахалăхĕ çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхман иккен. Вăл çыру ĕçĕнче „борба“, „пошол“, „сеснадцать“, „красноармейец“, „рож“, „мене“ тесе çырнă ачасенех „отлично“ паллăсем лартса панă, йăнăшсене тÿрлетмесĕр хăварнă.

IV-мĕш класра икĕ ачана пĕлÿ тĕрĕслевне тăратмасăр, çав класенчех тепĕр çул вĕренме хăварнă, 11 ачан кĕркунне пĕлÿ тĕрĕслевĕнче пулмала.

Ăвăспÿрт Кипечри вăтам шкулăн ĕçне каплипех хăварма йурамасть. Çитес вĕренÿ çулĕнче пит лайăх ĕçлеме хатĕрленес пулать.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

Кĕрхи тырăсене уйран пуçтарса кĕртнĕ хыççăн кĕр сухи тырпул тухăçне ÿстерес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен халь ĕнтĕ кашни колхозник лайăх пĕлсе тăрать. Çумкурăксемпе, сийенлĕ хурт-кăпшанкăсемпе кĕрешес ĕçре тата тăпра ăшĕнче нÿрĕ тытса йулас ĕçре вăл шанчăклă май. Кĕр сухи тăвиччен малтан ăшăхăн сухаласа хăмăл сухи тусан тата усăлăрах пулать.

Çумкурăксем нумайрах тухакан вырăнсенче, комбайнсемпе пуçтарса кĕртнĕ вырăнсенче тата вăрлăх участкисене, тулă, вир, тымарçимĕçсем акмали вырăнсенче кăçал хăмăл сухи тăвасси çинчен Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ приказ каларнă.

Хăмăл сухине тырпулсене вырнă хыççăн 2—3 кунтанах тытăнса 2—3 кун хушшинче сухаласа пĕтермеле. Сухаласса трактăрпа тата лаша вăйĕпе ĕçлекен лущилниксемпе, тулă плугĕне, вĕсем çитмен çĕрте ахаль плугсемпех тата шурут çук вырăнсенче дискăлă плугсемпе 6—8 сантиметр тарăнĕш сухаламала Кайарахпа, кĕр сухи тунă чухне, çав вырăна пĕтĕм тарăнĕш (20—23 сантиметр) илтерсе сухаламала.

Çумкурăксемпе кĕрешес шутпа тата тăпран сухаланакан сийĕ таран мар вырăнсенче çав сийĕ тарăнлатас шутпа кăçал республĕкре пурĕ 22,6 пин гектар çинче хура çĕртме тума палăртнă. Хура çĕртме тунă чух тислĕк, торф, извĕç, мергĕл, фосфорит çăнăхĕ тăкса 20—22 сантиметр тарăнĕш сухаламала.

Уй тайлăмĕ кăшт çеç пулсан та кĕр сухи тата хура çĕртме сухи тунă чух суха йĕрне тайлăма урлă тумала.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ приказĕ тăрăх 1938 çулта хăмăл сухи тата хура çĕртме сухи тума районсене çакăн пек план панă:

РАЙОНСЕМ	Хăмăл сухи (гектар)	Хура çĕртме сухи (гектар)
Улатăр	1000	600
Елĕк	1800	1100
Патăрйел	1800	1500
Вăрнар	2300	1100
Йĕпреç	1200	800
Ишлей	1500	800
Канаш	1000	600
Куславкка	1500	800
Хĕрлĕ Чутай	1200	600
Куванкинă	1100	1200
Сĕнтĕрвăрри	1400	700
Пăрачкав	1200	1350
Турхан	700	500
Тутаркас	1700	900
Трак	1500	900
Вăрмар	2000	1100
Çĕрпÿ	1800	1000
Шупашкар	1400	800
Шăмăршă	800	500
Шăнкăртам	800	500
Çĕмĕрле	800	500
Йелчĕк	2100	2150
Йетĕрне	1300	700
Тăвай	1500	900
Пурĕ	35.000	22.600

ТОКИОРАН КИЛНĔ ÇЫРУ

Йапонири рабочисен пурнăçĕ начарлансах пырать

Йапони империалисăмĕ Китай халăхне хирĕç вăрçă пуçласа йани Йапони ĕççыннисен пурнăçне калама çук начарлатрĕ. Вăрçа пула таварсен, чи малтан ĕçхалăхне куллен кирлĕ таварсемпе çимĕçсен хакĕ ÿссе кайнă. Çĕршыври предприйатисенче тĕрлĕ сăлтавсемпе ĕç кунне вăрăмлатаççĕ, ĕçукçине чакараççĕ.

Йапонире пĕр „Çакай Ундо Цусин“ хаçат çеç, полици панă сведĕнисене регистрацилесе, рабочисен йухăмĕ çинчен вăхăтран вăхăта материалсем пичетлесе кăларать. Çав хаçат çырса пĕлтернинчен те, Йапонири рабочисен пурнăçĕ кунран-кунах пит начарланса пыни йар уççăн курăнса тăрать.

Йапонире промышлĕннăç чылай аталаннă пулин те, капиталиссемпе рабочисем хушшинчи хутшăнура феодаллă йĕркен йулашкисем пур. Унта, сăмахран, халь те хĕрачасене пĕр çулран пуçласа виçĕ çуллăх таран хапрăка сутмали йĕрке пур. Час-часах хĕрачана хапрăка сутнă срук тухсан та, хапрăк хуçисем, капиталиссем, „чрезвычайлă вăхăт“ сăлтавĕсемпе работницăсене хăйсем патĕнчех хăвараççĕ. Нумай пулмасть, Хамамацу хулинче 17—18 çулхи виçĕ работницă куççул йухтарса полицирен пулăшу ыйтнă. Вĕсене 100 иеншĕн (иен I тенкĕ те 53 пус) хăйăр тасатас ĕçре ĕçлеме пĕр çулталăклăха сутнă пулнă. Вĕсен срукĕ иртнĕ çулти кĕркуннех тухнă, анчах предприйати хуçи „сирĕн парăм пур“ тесе малашне те кашни кунах 17-шер сехет ĕçлеттернĕ.

Рабочисен ĕçкунне ÿстерни пур çĕрте те пулакан ĕç пулса тăнă. Исезаки хулинче (Гумма профектури) пир-авăр тĕртекен хапрăк хуçи, ĕçкунне 4 сехет тăснă, рабочисене кашни кун 15-сехет ĕçлеттермеле тунă. Хокайдо утравĕ çинчи Отару хулинче баржăсем çинче кашни кун 12-шер сехет ĕçлеттермеле, тесе саккун кăларнă правителĕствă. Тĕрĕссипе рабочисене час-часах кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме тивет.

Рабочисен ĕçкунне вăрăмлатнă пирки предприйатисенче инкек-синкексем пулни нумайлансах пырать. „Çакай Ундо Цусин“ хаçатра пичетлесе кăларнă сведĕнисем тăрăх, Хиого профектуринчи предприйатисенче инкек-синкексем пулнипе 1933 çулта 5.890 çын вилнĕ тата суранланнă пулсан, 1937 çулта 14.239 çын вилнĕ. Ку вăл профектурăри ĕçлекен рабочисен пĕтĕм хисепĕнчен 1933 çулта 3.29 проценчĕ суранланса вилсе пĕтнине, рабочисем вилни 1937 çулта 6,23 процента çитнине пĕлтерет. Çав профектурăри предприйатисенче вăтам хисеппе кашни кун 38 çын вилет йе суранланать.

Рабочисен ĕçукçи тĕлĕшпе „Çакай Ундо Цусин“ хаçат ирĕксĕрех „иртнĕ çултинчен нимĕнле уйрăмлăх пулин те сисĕнмест“, тесе йышăнать.

Йапони влаçĕсем „чрезвычайлă вăхăт“ тенĕ сăлтавпа рабочисен йухăмне хирĕç çав тери хăйар ĕçсем тăваççĕ пулин те, стачкăсен йухăмĕ чакса пымасть. Март уйăхĕн çурринче Кавагуци хулинче (Сайтама профектуринче) „Нихон Пистон Ринг“ савăтĕнче рабочисем ĕçукçине ÿстерме ыйтса забастовкă пуçласа йанă. Рабочисем çине тăни, вĕсем хăйулă пулни савăт администрацине рабочисен ыйтуне пурнăçа кĕрттернĕ. Кайарахпа, Хокодате хулинчи резинă компанин рабочисем, Акитари хăма çуракан савăтри рабочисем 10 кун хушши забастовкă тунă. Çав забастовкăсенче рабочисем ĕçукçине 30 процент таран ÿстерме ыйтнă. Предприйати хуçисем рабочисене,—епĕр сире халĕ те нумай тÿлетпĕр, тесе калама хăтланнă. Анчах, рабочисем çине тăнă май, администрацин рабочисене ĕçукçи ÿстерсе памала килнĕ. Кавасаки хулинче (Токио çывăхĕнче) нумаях та пулмасть автобус çулĕ çинче ĕçлекен служащисем забастовкă тунă.

Вăрçă пуçлансанах Йапони военщинĕ халăха „вăрçă халех пĕтет, Китайа туртса илсен Йапони халăхĕн пурнăçĕ лайăхланать“, тесе лăплантарма хăтланнă. Анчах вăрçă çаплах пырать. Унăн вĕçĕ курăнмасть. Çĕршывра вăрçа хирĕçле шухăш рабочисем хушшинче çеç мар, салтаксем хушшинче те ÿссе пырать.

РЕСПУБЛИКĂЛĂ ИСПАНИРЕ
Республиканĕцсен çарĕн салтакĕсем атакăна хатĕрленеççĕ.
(Союзфото).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Левант фронтĕнче çапăçусем пур районсенче те пыраççĕ. Пăлхавçăсем пĕтĕм вăйсемпе пĕр трук Теруел—Сагунто çулĕ çине атакăлас шутпа, Алиагпа Теруелтен наступлени туса пыракан хăйсен колоннисене пĕрлĕштерме хăтланнă, анчах республиканĕцсем вĕсене аркатса тăкнă, пăлхавçăсен темиçе пин çын вилнĕ.

Кастельон провинцинче республиканĕцсем çапăçăва хăйсем пуçарса пыраççĕ. Вĕсем Виллйаермосе шывĕ патĕнче пăлхавçăсене хăйсен позицийĕсенчен хĕсе кăларнă.

Ийунĕн 25-мĕшĕнче фашиссен авиацийĕ Аликанте порчĕ çине çĕнĕрен бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем хулари рабочисем пурăнакан кварталсем çине пăрахнă. 100 çын вилнĕ тата 245 çын йăвăр аманнă.

(ТАСС).

КИНО

„Александр Невский" фильм

„Александр Невский" йатлă историлĕ пысăк фильм ӳкерес ĕç пуçланнă.

Плещейĕв кӳлли хĕрринчи Перейаславль-Залесскинче, Александр Невский хăй вăхăтĕнче купаласа тунă Александровски ту çинче, новгородецсемпе килĕштерейĕмен пирки Александр Невский урăх нимĕн тумасăр пулă тытса çӳренĕ сценăсене ӳкерсе илнĕ. Вăл хирĕçӳсем новгородцăсен айăпĕпе пулнă. Александр вĕсене ирĕке тухасшăн вăрçма чĕннĕ, лешсем килĕшмен, вара вăл хăйĕн килне Перейаславльне таврăннă.

Александр тутарсен посолĕпе тĕл пулнă сценăна та ӳкернĕ. Тутарсен посолĕ ăна Ордăна пырса хан патĕнче службăна кĕме илертнĕ, анчах Александр вăл сĕнӳпе килĕшмен. Фильм ӳкерекен коллективăн експедицийĕ Новгорода кайса, сыхланса йулнă историлĕ памйатниксем тăрăх вăл хула ĕлĕк-авал мĕнле пулнине тĕпчесе пĕлнĕ. Çитес çывăх кунсенче „Мосфильм" киностуди коллективĕ Коломнăна кайать, унта Мускав йуханшывăн пĕр шыв кукринче „XIII-мĕш ĕмĕрти Новгород" хулине туса лартаççĕ. Пысăк лаптăк çинче авалхи Новгородăн çурчĕсене тăваççĕ—собор, сутăçсен речĕ, хулан центрти пайĕнчи çулсем çине хăма сарнă урамĕсене т. ыт. те тăваççĕ.

Кунта Псков беженцисем Новгорода пынине, Александр Невский хăйĕн дружинипе тата ополченипе пынине, тата Вечевой площĕтри сценăсене те ӳкерсе илеççĕ.

Хальхи вăхăтра, тевтонски (нимĕç) рыцарсемпе çапăçнине ӳкерме (вăл çапăçу историйе „Пăр çинчи çапăçу" йатпа кĕнĕ). Чудской кӳлĕ декорацийĕсене тăвас ĕç пырать. Мускав Совечĕ çакăн валли „Мосфильм" кинохапрăкĕ патне 30 пин тваткăл метр çĕр лаптăкĕ уйăрса панă. Ку вырăна хал тикĕслеççĕ, асфальт сараççĕ тата çийелтен искусственнăй пăр (шĕвĕ кĕленче) витеççĕ.

Чудской кӳлĕ пăрĕ çинчи историлĕ çапăçăва ийунĕн вĕçĕнче ӳкерме пуçлаççĕ. Ку çапăçу Александр Невский нимĕç рыцарĕсене çĕнтернипе пĕтнĕ. Массăлă сценăсене ӳкерме, уйрăмăнах „Пăр çинчи çапăçу" сценисене ӳкерме, вăрăм çынсем нумай кирлĕ. „Мосфильм" кун çинчен пĕлтерӳ пичетлесе кăларчĕ, çакăн хыççăн тепĕр куннех çав сценăсене ӳкерес ĕçе хутшăнма килĕшекен вăрăм çынсем 2.000 йахăн пухăнчĕç. Фильмăн массăлă сценисенче пурĕ 3 пине йахăн çын пулать.

Фильм валли 3.600 костюм тата 10 пин тĕрлĕрен хĕçпăшалсем—пуртăсем, хĕçсем, сăнăсем, кинжалсем, щитсем т. ыт. те тума заказ панă.

Тĕп рольсене выльакан артиссене суйласа илнĕ тата вĕсене Кинематографи ĕçĕсен комитечĕ çирĕплетнĕ. Александр Невский рольне республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ—орденоносец Н. К. Черкасăв выльать, Васка Буслай тата Гаврил Алексич ролĕсене—орденоносец Н. П. Охлопкăв тата А. Л. Абрикосăв артиссем выляççĕ, Новгородри ремесла ушкăнĕсен представителĕ— кольчугă ĕçĕн маçтăрĕ Игнат рольне—республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ Д. Н. Орлов выльать.

Фильм валли музыкă Çергей Прокофийĕв композитăр çырать.

З. М. Ейзенштейн — искуствăсен тава тивĕçĕ дейателĕ,
Д. И. Васильйĕв — „Александр Невский" кинофильмăн режисçорĕ.

Саслă фильм йалта

„Ленин в Октябре". Ийунĕн 24-мĕшĕнче Голодйайĕвкă (Шупашкăр р.) колхоз клубĕнче „Ленин в Октябре" йатлă саслă фильм кăтартрĕç. Кино курма халăх пит нумай пухăннă. Екран çинче Владимир Илйич Ленина курсан колхозниксем тăвăллăн ала çупса саламларĕç. С. Кириллăв.

„Балтийцы". Йетĕрне районĕнчи Пушнар, Изамбай, Йуманлăх тата Çармăскасси йалĕнчи колхозниксемпе йединоличниксем вăрман хатĕрленĕ çĕрте ĕçлеççĕ. Çак кунсенче вăрмана „Балтийцы" йатлă саслă кинофильм пырса кăтартрĕç. Куракансене кино пит те килĕшрĕ. Г. Корольков.

42 кĕвĕ пĕлет

Йеншик йалĕнчи (Трак р.) пионер Дмитрий Григорйĕв кăçал Супарти туллимар вăтам шкултан отличнă вĕренсе тухрĕ. Вăл шкулта пур предметсемпе те отличнă вĕренсе пынипе пĕрлех, музыкă ĕçне те йуратать. Вăл 13 çулта çеç пулсан та пĕр пĕтĕ гармоньпе 42 кĕвĕ калама пĕлет.

Ийунĕн 26-мĕшĕнче, суйлав кунĕ, Григорйĕв йулташ суйлав участкисене пырса суйлавçăсене гармоньпе тĕрлĕрен илемлĕ кĕвĕсем каласа кăтартрĕ.

Б-в.

Хапрăк-сават комитечĕсемпе вырăнти комитетсен ĕçукçи тĕлĕшпе ĕçлекен комиççийĕсем

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕ хапрăк-сават комитечĕсемпе вырăнти комитетсен ĕçукçи тĕлĕшпе ĕçлекен комиççисен Положенине çирĕплетнĕ. Вăл комиççисем пур хапрăк-сават комитечĕсем çумĕнче, предприйатисемпе учрежденисен вырăнти комитечĕсем çумĕнче, çавăн пекех тата цехсенчи комитетсем çумĕнче те организациленеççĕ. Вăл комитетсенче ĕçлемели çынсене вырăнĕсенчи йертсе пыракан профсоюз органĕсем стахановецсемпе ударниксенчен, инженерлă-техникла работниксенчен тата служăщчисенчен суйласа илеççĕ.

Çакна туни тĕллевĕ—союз членĕсен йышлă активне ĕçукçи ыйтăвĕсене татса парас ĕçе йавăçтарасси ĕçшĕн тӳлеме чи лайăх çиçтемă тăвас ĕçре—ĕç тухăçлăхне хăпартма хавхалантарма, работниксен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатса тыма пулăшакан, çавăн пекех тата ĕç вăйĕ пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçассине пĕтерме май паракан çиçтемă туса хурас ĕçре хапрăк-сават комитечĕсемпе вырăнти комитетсене пулăшу парасси пулса тăрать.

Комиççи ĕçукçи ыйтăвĕсемпе ĕçлет тата вăл ыйтусемпе кăларнă саккунсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тĕтăшлăнах контроль туса тăрать. Ĕçукçи тӳлес ĕçре саккуна пăсасене, рабочисемпе служăщчисен ĕçукçине тĕрĕс мар тытса йулнисене палăртсан, комиççи вăл пăсăксене пĕтерес тĕлĕшпе хăй тĕллĕнех кирлĕ пек мерăсем йышăнать, кирлĕ чухне ун çинчен ыйтăва сават комитечĕ умне йе вырăнти комитет умне лартать, вăл ыйтăва хăвăрт татса памала тăвать.

(ТАСС).

Çулйĕр ĕçне йертсе пыни çук

ЕЛĔК. Чылай колхозсенче çулйĕр ĕçĕнче ĕçлеме йатарласах бригадăсем организациленĕ. Хăшпĕр бригадăсем çăва тухнăранпа пысăк ĕçсем турĕç. Асаматри колхоз кĕпер тумали материалсене хатĕрлесе турттарса 9 метр тăршшĕ кĕпер турĕ. Вăл колхоз хăй çумне çирепленсе панă икĕ километр çулйĕре хăйăр сарса йусаса тухрĕ. Колхоз кăçалхи çулйĕр строителстви планне ытлашшипех тултарнă.

Çакăн пекех Йашуткă тата Кайри Хирлеп колхозĕсем те хăйсен планĕсене тултарассишĕн çине тăрсах тăрăшаççĕ.

Анчах районри пур колхозсем те кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Хăшпĕр колхозсем çулйĕр ĕçне пайанхи куна çитсе те тытăнман. Акă Шĕмшевĕш йалсоветĕнчи нихăш йал та, нихăш колхоз та çулйĕр ĕçне хутшăнман, çул çинче пĕр çын та ĕçлемест. Вылăран Атмалкасси йалне кайма питĕ хĕн, автомашинăпа, лашапа çӳреме май çук. Çулсем шăтăклă, тумхахлă, кĕпер те çĕмрĕк. Вĕсене йусамаççĕ-ха.

Кунашкал пулни районри çулйĕр пайĕ çулйĕр строителстви ĕçне начар йертсе пынинчен килет. Колхозсемпе йединоличниксем хăйсен планĕсене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемен. Колхозниксем хушшинче ку ыйтупа нимĕнле массăлă ĕç те çук. Çакĕсем çинчен пĕле тăркачах райĕçтăвком та, çулйĕр строителствине вăйлатас тесе конкретлă пулăшу памасть.

Иефремăв.

Çулйĕр участкисенче

Чул турттараççĕ. Ишек йалсовечĕ (Ишлей р.) çулйĕре лайăх тытса усрассишĕн тăрăшса ĕçлет. Çак кунсенче йалсоветне кĕрекен колхозсем Кӳкеçпе Алинă тата Шупашкарпа Вăрнар хушшинчи çулсене хăйăр сарса 5 километр тăршшĕ уйукласа тухрĕç. Халĕ чул турттараççĕ. Шăпачав колхозĕ—37 кубла метр, Кипеккасси колхозĕ—13 кубла метр, Хура Çырма колхозĕ 11 кубла метр турттарчĕç. Чул турттарас тĕлĕшпе уйрăмăнах Р. Йегорăв, В. Сорокин, Д. Самарин колхозниксем хастарлăн ĕçлеççĕ, вĕсем хăйсене панă нормăна ытлашшипех тултарчĕç.

Арк. Наумăв.

Хăйăр сарчĕç. Çĕнйал Шетмĕри Блӳхер йачĕпе тăракан колхозри çулйĕр бригади (бригадирĕ Аниçимăв йулташ) хăйĕн участкинчи çул çине 1500 лав хăйăр турттарса сарчĕ. Çав вăхăтрах Шупашкарпа Вăрнар хушшинчи çула та йусасах тăраççĕ.

Ив. Çергейĕв.

Лайăх çулйĕршĕн. Çĕнĕ Йекĕтри „Ирĕклĕх" колхоз членĕсем (Трак р.) 12 çынтан çулйĕр бригади организацилерĕç. Бригадăна Петр Матвейĕв йулташ йертсе пырать. Вăл тăрăшнипе бригада чылай пысăк ĕçсем турĕ. Икĕ километр тăршшĕ çул çине 350 кубла метр хăйăр сарнисĕр пуçне шыв кӳлленсе тăракан вырăнсене трубăсем лартрĕ.

Г. Йефисăв.

Плана тултарнă. Районтан панă план тăрăх Аслă Чакри (Вăрмар р.) Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозăн 420 кубла метр грави хатĕрлесе çул çине турттармала пулнă. Колхоз плана ытлашшипех тултарчĕ. Халĕ колхоз членĕсем çула йусасах тăраççĕ.

В. Андрианăв.

Йăнăша тӳрлетни

1937 çулхи нойабĕрĕн 26-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ" хаçатра „Райĕçтăвкŏм аппарачĕ таса пулмала", тесе çырнă А. Кахоўский йалкорăн ĕçтăйĕнче С. И. Иварбейĕв йулташ (унчухне вăл райĕçтăвкŏм председателĕн заместителĕ пулнă) халăх тăшманĕ, тесе йат панă.

Статйара çырни тĕрĕс мар. Иварбейĕв йулташ халăх тăшманĕ пулман. Вăл халĕ Тăвай райĕçтăвкомĕнче финанс пайĕ пуçлăхĕ пулса ĕçлет.

Спорт хроники

Шупашкарсене çĕнтернĕ. Халĕ Çимферополь хулинче „Темп" спорт общĕствин йенĕпе Совет Союзĕнчи малти вырăна тухассишĕн футбул вăййипе ăмăрту пырать. Ăмăртăва 8 командă, çав шутрах Шупашкар хулинчи „Темп" общĕствин команди хутшăнать. Малтан Шупашкар команди Алма-Ата командипе тĕл пулса выльанă, вăйа 5 : 0 шутпа — Алма-Ата команди çĕнтерипе пĕтнĕ.

„Буревестник" — „Динамо". Ийунĕн 26-мĕшĕнче „Темп" общĕствин стадионĕнче Шупашкарти „Буревестник" тата „Динамо" футболисĕсем йулташла тĕл пулса выльарĕç. Иккĕмĕш таймра, „Буревестник" футболисĕсем „Динамо" алăкне икĕ мечĕкă тапса кĕртрĕç. Анчах вăйа пĕтесси 5 секунд йулсан динамовцăсен нападенинчи Бурцĕв йулташ „Буревестник" алăкне пĕр мечĕкă тапса кĕртрĕ. Вăйăра 2 : 1 шутпа „Буревестник" футболисĕсем çĕнтерчĕç. Икĕ командинче те „Спартак" общĕствинчен куçнă футболиссем выльарĕç.

Çав кунах „Динамо" тата „Спартак" общĕствисен çамрăк футболиссен командисем выльарĕç. Вăйа 3 : 1 шутпа спартакăвецсем çĕнтернипе пĕтрĕ.

Пионерсен лагерĕ хатĕр мар

Пионерсемпе шкул ачисем çулахи каникулсенче. Вĕсен культурăлă канса, хăйсен сывлăхĕсене çирĕплетмеле. Ку тĕлĕшпе Шупашкар комсомол райкомĕн бӳровĕ ийулĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа райопра 100 вырăнлăх пионерсен лагерне тума йышăннă. Лагер комиççине виçĕ çынтан уйăрса хăварнă, лагер начальникне те тупнă. Анчах лагер комиççинче тăракан йулташсем ку ĕçпе ĕçлемеççĕ.

Ийулĕн 1-мĕшĕ çывхарса çитет пулин те лагер пуласси паллă мар-ха. Пайанхи куна продуктăсем пухма договăрсене туса пĕтермен, 60 койкă çитмест тата выртса тăмали хатĕрсем çук. Шупашкар комсомол райкомĕ пионерсен лагерне кăçалах тăвать-ши?

Гр. Петров.

Планерисăм маçтарĕ В. М. ИЛЬЧЕНКО, Тулари аеродромра.
Планериссен Тулă хулинче ийунь пуçламăшĕнче пулса иртнĕ Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕнче вăл рекордлă вĕçев тунă.

Кĕскен

ÇĔНĔ ШКУЛ. Мăн-Йавăш йалĕнче (Хĕрлĕ Чутай р.) халиччен шкул çурчĕ пулман. Ачасем уйрăм пӳртсенче вĕренсе пурăннă. Хальхи вăхăтра туллимар вăтам шкул çуртне тума пĕренесем турттарчĕç. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле шкул хатĕр пулать.

Й. Самарин.

ГРУЗОВИК ТУЙАНЧĔ. Мишер йалĕнчи (Тутаркас р.) „Ядро" колхоз ийунĕн 20-мĕшĕнче государствăна 45 центнер аш-какай сутса грузовик туйанчĕ.

В. Йермолайĕв.

ПЫСĂК СКЛАД. Кăшаркассинчи (Çĕрпӳ р.) „Пионер" колхоз çак кунсенче 2.700 пăт тырă кĕрекен çĕнĕ склад туса пĕтерчĕ. Кунсăр пуçне колхозăн 30.000 пăт тырă кĕрекен икĕ склад пур. Вĕсене иртнĕ çулта туса лартнă. Çапла вара, ăнса пулнă тырпула вырнаçтарма колхозăн складсем çителĕклĕ. Складсене дезинфекцилесе тасатнă.

А. Иванов.

КАРАС ПĔВИ. Йуманай йалĕнчи „Большевик" колхоз (Йетĕрне р.) карас пулă ĕрчетме йатарласа пĕве тăвать. Пĕве тунă çĕрте ĕçлекенсем валли столовăй организациленĕ. Колхозниксен хастарлăхĕ пысăк. В. Иванов, М. Иванов, С. Малов тата П. Денисăв колхозниксем кулленхи нормăна 400 процент тултарса ĕçлеççĕ.

С. Кириллăв.

Тӳрлетни

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн ийунĕн 26-мĕшĕнче тухнă 145-мĕш номĕрте, йулашки страницăра „Вăтам шкулсенчен вĕренсе тухаканçен вечĕрĕ" йатлă заметкăра Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шĕнерпус йалне йăнăш асăннă. Ăна Хуракасси тесе вуламала.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Гидроузелăн Шупашкарти ушкăнĕсене йалан ĕçлеме рабочисем кирлĕ

Арçынсене тата хĕрарăмсене те илеççĕ.
Ĕçукçи ĕçленĕ тăрăх.
Çак адрĕспе пымала: гор. Чебоксары, ул. Кадыкова, дом № 6 2 (2-й этаж) к ответ. исполнителю по кадрам.

Пайан кино-театрта	Çĕнĕ, документлă, саслă фильм ГОРОД ЛЕНИНА Коллективлăн курма заявкăсем йышăнаççĕ.

Комсомолĕцсемпе сойузра тăман çамрăксене

Колосăв йулташ чĕнĕвĕ тăрăх Хĕвел-тухăç Çĕпĕр облăçне вăрман ĕçлеме кайма шутлакансен справкăсем тата каймали условисем çинчен хăйсем пурăнакан районсенчи йе хуласенчи ПСÇЛКС Комитечĕсенче ыйтса пĕлмеле. Çавнашкалах Çĕмĕрлере (ул. Володарского, д. № 10) „Востсиблес" трестăн представителĕнчен—Тӳньков йулташран ыйтса пĕлмеле. Кайакансене çул укçи, сутăчнăй тата пĕтĕм расхутлăх тӳлеççĕ.

„Востсиблес" трестăн представителĕ ТӲНЬКОВ.

ПĂХĂР ТА ИТЛĔР!

„Сойузкинопрокат"-ăн Чăваш республикĕнчи уйрăмĕ çак кунсенче республикăри кино-театрсен екранĕсем çинче кăтартма кăларать:

ДЕТСТВО ГОРЬКОГО
„Союздетфильм" киностудийĕ тунă çĕнĕ фильм

МАЛЕНЬКАЯ МАМА
Франческа Гааль выльать

ОСТРОВ СОКРОВИЩ
Саслă, прикльученилĕ, çĕнĕ фильм.

Радио тăрăх тата хаçатсем çинче пĕлтернисене асăрхăр!

„ГЛАВКОЖОБУВЬПРОМ"-ăн СУТУ-ИЛӲ БАЗИ
(Заводская ул. 12, Зеленный базар)
ЗИС—5 автомашинă
(3 тоннă йăвăрĕш тийесе çӳремели)
сутать
Йнах оперативлă учотчик тата икĕ сторăж кирлĕ.

Чăвашполиграфтрестăн
Шупашкарти 1-мĕш № типографине
Аслă бухгалтĕр, аслă бухгалтĕр заместителĕ кирлĕ
Условисем килĕшӳ тăрăх.
Заньати вăхăтĕнче çак адрĕспе пымала: Дом Печати, нижний этаж, к директору.
2—1

ПЕРЕКЕТ КАССИНЕ УКÇА ХУРĂР!

Государствăн перекет кассисене ĕçсыннисем вклад хуни çулран çул ӳссе пырать. Халь рабочисем, хресченсем тата служăщчисем пурĕ 14 мĕлйун çын ытла вкладчиксем пулса тăраççĕ, вĕсен перекет кассисенче усранакан укçисен сумми 5 мĕлйард тенкĕ шутланать. 1938 çулхи пилĕк уйăх хушшинче вкладсен сумми 737 мĕлйун тенкĕ хутшăннă, 1937 çулхи малтанхи пилĕк уйăхпа танлаштарсан икĕ хута йахăн ытларах ӳснĕ.

Вкладчиксен тата вкладсен хисепĕ питĕ вăйлă ӳссе пыни ССР Союзĕнчи ĕçсыннисен материаллă пурнăçĕ, культурăлă тăрăвĕ ӳссе пынинчен, пирĕн çĕршыври граждансем перекет кассисене хунă укçа мĕн тума кайнине лайăх пĕлсе тăнинчен килет. Перекет кассисене хунă вкладсем ССР Союзĕн финанс хăватне ӳстереççĕ, вĕсемпе çĕнĕ хапрăксем, саватсем, МТС-сем, шкулсем, йаçлĕсем, пульницасем т. ыт. те тунă çĕрте усă кураççĕ.

Перекет кассисем ССР Союзĕн пур хулисенче те, пур районсенче те пур; вĕсен хисепĕ халь 23 пин ытла шутланать.

Укçана государствăн перекет кассисенче усрасан аван тата усăллă. ССР Союзĕнчи кашни ĕçсынни перекет кассин вкладчикĕ пулма пултарать. Вкладсене пур перекет кассисенче те йышăнаççĕ тата уйрăм пайăн йе пĕтĕмĕшпех вкладчик ыйтсанах параççĕ. Вкладчик ыйтнă тăрăх укçан пĕр пайне йе пĕтĕмĕшпех пĕр перекет кассинчен теприне пур вырăна та куçараççĕ. Перекет кассине хывнă укçасем пĕтĕмĕшпех сыхлăхра пулассине совет правителстви шантарать. Перекет кассисем вкладсен вăрттăнлăхне тĕрĕс тытса пыраççĕ. Перекет кассине укçа хуракан çын хăй вилсен укçине кама памалине,—хăйĕн çывăх тăванне, йе урăх çынна, йе организацийе памалине малтанах пĕлтерсе хума пултарать. Вкладчик хăйĕн укçине кама памалине каласа хунă хыççăн та хăйĕн вклачĕпе хăй усă курма пултарать.

Вкладчик, хăйĕн ирĕкĕпе, перекет кассинчи хăй укçине урăх çынна та илтерме пултарать. Апла тăвас тесен вкладчик вăл çынна довĕреннăç тата хăйĕн перекет кĕнекине памала.

Перекет кассисем вкладчиксене процент тăрăх доход тӳлеççĕ (çулталăкне кашни çĕр тенкĕ пуçне виçĕ тенкĕ). Иккĕмĕш пилĕкçуллăх хушшинче перекет кассисем процент тăрăх халăха пурĕ 600 мĕлйун тенкĕ тӳленĕ. Процент тăрăх 1937 çулта кăна пурĕ 120 мĕлйун тенкĕ тӳленĕ.

Государствăн перекет кассисен тата Государствăн кивçенлĕхĕн Тĕп Управленийĕ.

ВĂРНАРТИ ЗООВЕТТЕХНИКУМ
1938—1939 ÇУЛСЕНЧЕ
вĕренекенсене илесси çинчен пĕлтерет

ТЕХНИКУМĂН ИКĔ УЙРĂМ

Зоотехникă уйрăмĕ — майракалă шултра выльăхсем тăрăх ĕçлекен специальнăçпе кĕçĕн зоотехниксем вĕрентсе хатĕрлет. Вĕренмели срук 4 çул. 30 çын йышăнаççĕ.

Ветеринари уйрăмĕ — ветеринари врачсен помощникĕсене вĕрентсе хатĕрлет. Вĕренмели срук 4 çул. 60 çын йышăнаççĕ.

Пĕрремĕш курса 15 çулхисенчен 30 çулхисем таран çичĕ çуллă шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Зайавленисене 1938 çулхи ийунĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 18-мĕшчен йышăнаççĕ.

Зайавленисемпе пĕрле çак документсем кирлĕ: 1) Туллимар вăтам шкул пĕтерни çинчен свидетелствă (подлинник), 2) Государствăн емеллекен учрежденисенчен илнĕ справкă, ун çинче вĕренме кĕрекенĕн сывлăхĕ ку техникума вĕренме кĕме йурăхлине кăтартни пулма кирлĕ, 3) Хăш çулта çуралнине кăтартакан справкă, 4) Икĕ фото-картăчкă (зайавлени параканĕн хăйĕн алпуссе пĕр-пĕр учрежденире çирĕплеттермеле), 5) Çар службĕ тивĕçлĕхне кăтартакан документ (военнообйазаннăйсен).

Испытанисем 1938 çулхи августăн 19-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕччен пулаççĕ. Çак предметсемпе: вырăс чĕлхи, литературă, математикă, физикă, физикăлă географи тата обществоведени.

Испытанине чĕннĕ тăрăх çеç пымала, пĕрле паспăрт кирлĕ.

Студентсене вĕреннине кура стипенди параççĕ, общежити, столовăй, мунча, кĕпе-йĕм çумали пур, выртса тăма матрас, одейал параççĕ.

Зайавленисене тата ыйтусене çак адрĕспе йамала: ст. Вурнары, ЧАССР, Зооветтехникум.

3—1 Дирекция.

Уполномоченный Чувашглавлита № 318
Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 500.

